Михаил СУНТАЛ

# МАЛТАНХИ СӐВӐСЕМ

ШУПАШКАР 2009

ББК 84 (2РОС)–Чув 6-52Я93
С 94

Михаил СУНТАЛ. Малтанхи сăвăсем. – Шупашкар, 2009. – 92 с.

Ку сăвăсене автор пĕр хĕрĕх çула çитсен 80-мĕш çулсенче çырма пуçланă. Унччен вăл урăх шухăш-кăмăлпа çӳренĕ, унăн ĕç-хĕлĕсем техникăпа çыхăннă пулнă. Ку кĕнеке пирки шутласан, сăвăсен авторне ватăлсан кăна поэзии ăсĕ кĕнĕ теме пулать.

М. СУНТАЛ, 2009

## *АЧАЛĂХ ÇĂЛКУÇĔ*

* * *

Хам чĕрене сана парсаттăм...
Тапах, çăлкуç, эп виличчен!
Ывăçпала хĕвел тытсаттăм
Ача чухне шыв питĕнчен.

Эп ĕçнĕ çаврăнса пăхмасăр,
Çăлкуç, ачалăх хĕвелне.
Кайран мĕн-ма манса хăвартăн
Шыв çийĕнчи хĕвел çулне?

Чĕлхе-çăвар типсе çимтсен,
Сана, çăлкуç, аса илетĕп.
Тăван киле тепре килсен,
Чĕр хĕлхемпе ăша пĕçертĕп...

Таса та сивĕ – шăрăх кун –
Çăлкуç, юхма эс чарăнмарăн.
Çемçе те ăшă – сивĕ чух –
Пăрпа эс хупланса выртмарăн.

Выртса ĕçме пăрахнăран,
Типсе пыратăн, тен, куçран?
Çăлкуç, тумлать ман аллăмран
Пĕр-ик тумлам...

* * *

Хулпуççие пусмасть кун-çул çĕклемĕ.

Вăхăтлăха эп тухрăм çул вĕçне.
Куçа çиет кивелнĕ шкул хĕлхемĕ.
Манман иккен эп ăс лаççи тĕлне!

Ача сасси юхать шăнкравлă хумлăн.
Ун сассине çитмест кунçул утти.
Ку çĕршывра сукмак пекки те пулнă.
Çав сукмакра юлнах пуль çул хытти?

Юлса чунра ачалăхри айванлăх.
Çук, ватăлма пĕлмест çын нихăçан.
Ӳсет чечек пĕрре кăна татмалăх.
Кама паран, савнийĕм çук пулсан?

Хулпуççийе пусмасть кун-çул çĕклемĕ.
Вăхăтлăха çеç тухрăм шкул тĕлне.
Таçта çити вĕçет чĕре хĕлхемĕ.
Çитсе пулать-ши манăн хам патне?

* * *

Аякра, аякра... Чĕлтĕрти чунăмра
Ачаран илтнĕ сас упранать.
Çывăрать хĕлĕпех шăн туратлă йăмра,
Çуркунне вăл каллех вăранать.

Çапла мар-и вара? Ăшăтсан ăшăмра,
Шăн папка шаплатсах çурăлать.
Манăçми тусăмсем, ак, тапать аллăмра
Пĕр чĕре! Паллаймарăр пулать?

* * *

Ăçта пытанчĕ-ши ачашлăх?
Пулма кирлех вăл ватăлсан!
Кĕтсе илет мана ачалăх
Çул вĕçĕнче çара уран.

Халь тин хама эпĕ пĕлетĕп...
Килмар мана çын юратни!
Хам пурнăçа паян йĕрлетĕп:
Мĕн чухлĕ пулнă çухатни!

Мĕне çухатнă – çавă тăтăр
Ман умăмра тăпăртатса.
Мĕнрен пуçланă – çавă тухтăр
Ман куç умне кăштăртатса.

Çул вĕçĕнче каллех çĕклетĕп
Хам чунăма çӳлтен çӳле.
Йăлт ватăлсан аса илетĕп
Ачалăхри çут куççуле...

* * *

Манăн чун пек таçта... Аякра, аякра...
Çăлтăр йăлтăрр! тăвать çухалса-тупăнса.
Пуçăма каçăртса кăшкăрап: «Эй-хей-ей!»,
Ахрăм çук-и тесе.
Юн тапать тăнлавра.
Çук пулас.
Тахçанхи авалхи сапаланчăк сассем –
Пăшăл-пăшăл! тусах сӳнсе пĕтрĕç вĕсем.

* * *

Сана ăнсăртран тĕл пулманшăн,
Тахçан кулянаттăмччĕ пит.
Паян, çыншăн мар, тулькка саншăн
Çиçсе пăлханать ăшă пит.

Анчах эп хăйса чĕнеймерĕм
Çап-çутă салам чĕлхипе.
Таçта тăрса юлтăн, пĕлмерĕм?..

Куçу çеç вылять хӳрипе.

Халь тин тĕл пулма та хĕнрех пуль?
Ӳкет шурă юр çĕр çине.
Чун çеç калама тем пĕлет пуль?
Усрать ăш салам сăмахне...

* * *

Кунран-кун шутлă пурнăçа
Сапатпăр кăшт кăна, ывăçпала.
Тĕтрелĕх карнă çул юппи...
Хускалнăн туйăнать пек çын мĕлки!
Вил шывĕ ӳкнĕ çаранра
Йĕрсем юлаççĕ палăрса...

* * *

Ватăлмасть-ха авалхи вăрман.
Хура çул каллех кăшт çеремленнĕ.
Кам кăна унта кĕрсе курман?
Пĕр кĕрсен, туха пĕлми çӳренĕ...

Икĕ çул пĕрлешнĕ пĕр тĕлте.
Уйрăлу, санпа пĕрле тăратăп!
Çулçăсем вĕçеççĕ пек çӳлте –
Хурама та тайăлнă – куратăп.

Çамрăк чĕрене кĕрхи пушар
Ачашларĕ ун чухне хаяр.
Эс каларăн: «Ан çӳре хыçран.
Çаврăнса утсан, мана куран!»

Иртсе кайрĕ çав телей кӳмесĕр.
Кун килет çавна, тен, çавăрма?
Юрату çинчен аса илмесĕр
Вырнаçмасть чĕре çĕр çывăрма.

* * *

Хуралнă çĕр çине хуллен
Шур юр ӳкет те ирĕлет.
Тата, татах кӳтет!
Таçта çухалнă йĕрсене
Шыра, шыра пĕтет...

Ăçта эсир, куç хывнисем,
Ачалăхри çут тĕлĕксем?..
Шур юр ӳкет... Тен, вăл пĕлет?
Тата теме кĕтет.

* * *

Шăпа аçа çапрĕ, тухатрĕ чуна.
Чунри тĕтре витĕр вăратрĕ сăна –
Сăртра ларса юлнă «сăхманлă» шкула.

Çĕкленчĕ çут-тăвăл, вылятрĕ юна,
Аса илӳ куçĕ пăвать вăхăта –
Чĕре тĕпĕнчен ăсса ил кăмăлна!

Эх, туслăх çуначĕ! Ачаш çил ăшра.
Асамлă вут хыпнă кăвайт аякра –
Чĕр туйăм тумлать каçхи шăплăхра.

Пĕр вĕççĕр çулсем таçта çитиччен
Чупма тытăнаççĕ-мĕн шкул умĕнчен.

* * *

Çул хĕррипе выртать хăйне пăхса.
Тен, ватăлтăмăр та пулĕ, тет?
Тахçан эп ун çинчен чупса анса...
Çак сăрт çинче каллех ман чун килет.

Юратрăмăр нумай çак тĕнчере!
Çук, чарăнма пĕлмесĕр юрт!
Илсе килеç çулсем хăш чух пире
Çак сăрт çине. Ухса çитме тем терт.

Çӳле чупса хăпартăмăр каллех.
Шкул ачисем кăшт ватăлнă çӳçрен...
Паллатăп эп сире! Пĕр улшăнман пекех...
Умра ем-ешĕл хурăнсем вĕçрен.

Пĕрле вĕсем... Хавас туйăмсене
Хушатпăр тăрăшса вăрах калаçура.
Хăй тĕллĕнех тухать чĕлхе вĕçне:
«Хăçан çапла, тепре тĕл пулура?»

* * *

Ман ватăлайнă çамрăк туссене,
Пытанмалла вылянă пек пулса,
Паянхи кун тупайрăм шыраса...
Çын ĕмĕрĕн таппи пит сарлака!

Пире курсан, ват шкулăн умĕнче
Вăхăт çаврать хăй çунатне калле.
Чупса иртет халь хăвăрт çулсенче
Вĕсен те пурнăçĕ маннипеле пĕрле.

* * *

Мĕн-ма юрлама юрамасть-тĕр
Пĕрле çак хаваслă çут кун?
Шкулпа тĕл пулма эпĕр хатĕр.
Кашни чĕрере кĕрлет вĕри юн!

Çĕклен çӳлерех авалхи мăн юманăн!
Куратпăр сана аякран ватă шкул...

Пире вĕрентсе ăсран кăларманшăн
Тавах! Анне вырăнне эсĕ пул!

Чăнах та, тăран тĕтре ăшĕнче пек.
Пĕркеннĕ ват шкул ĕмĕрхи тусанпа.
Ан тив. Хурланма вăхăт çук тек.
Кăвар кĕлпе хутăш... Çунать çулăмпа!

Туссем пек пулса юрату тутанар-и,
Йӳççи те пылак хутшăнаç-и пĕрле?
Нихçан манайми ват шкула асăнар-и?
Хăватлă саспа тĕл пулу эс кĕрле!

* * *
Ăшри хĕвел, юратнă шкул хĕлхемĕ,
Чунтан савать манми вырăнсене.
Кăвак куççем мĕн-ма халь тин илемлĕ,
Мĕн-ма халь тин куратăп вĕсене?

Эп ачасен ушкăнĕнче тăратăп.
Çĕн шухăшсем чĕртеççĕ чĕрене.
Çул хĕрринчи хирте юлса усратăп
Шкул çутипе çуталнă сăнсене!

* * *
Нихăçан манас çук хурăнсем
Куç умне халь тухаççĕ чупса.
Юлташсен тап-таса куçĕсем
Пĕр сисмесĕр пăхаççĕ савса.

Вăхăта ас илмесĕр сăна!
Чун-чĕрӳ сан кунта, ман ăшра.
Нихăçан манас çук эп сана,
Ватă шкул. Эс тăран ман умра.

Тĕтре витĕр тахçан, çамрăк чух,
Ал сулса уйрăлсан эп санпа,
Савнă шкул, эс хĕрӳллĕ вучах,
Упранан ялкăшса çулăмпа...

* * *

Çăмăл кĕвĕ карчĕ чĕрене çу каçĕ.
Куç ӳкерчĕ уйăх хура çăл çине.
Çамрăклăх çуначĕ, шкулăн ватă вальсĕ,
Тухатса хăварчĕ тунсăх туйăмне.

Вут кайăк пек çунчĕ юрату юмахĕ,
Ăс-тăна иленчĕ, çавăрчĕ йăва.
Тантăшсен ытамĕ, калайман сăмахĕ...
Çĕрĕпе тăнларĕ таврари хăва.

Çунатланнă ĕмĕт куçран куç çӳрерĕ,
Уçлăха çĕкленчĕ çутă çăлтăрла.
Тĕл пулу саманчĕ, пурăнăç чиперĕ,
Чунсене ачашшăн тăтăш çупăрла.

* * *

Çаврăнать вĕçсе кăйкăр хир тавра.
Татăлас çук пурнăçăм. Эс тăран умра.
Нумай ютă куртăм, чаплă ял-хула...
Илсе килчĕç çул-йĕрсем тăван çĕршыва.

Кĕтсе ил мана, çырмари йăмра,
Чунăмра çĕкленнĕ çилпе тайăлса.
Курап çывăхрах, çутă лапамра,
Тăлăх кил ларать, чалăшшăн пăхса...

Явăнать анчах кăйкăр ял тавра.
Куçĕпе савать кăвак уçлăха.
Хăçанччен çӳрерĕм эпĕ катара,

Кам-ха халь тăвать çак уйра суха?

* * *

Ăс-хакăл, туйăм, юрă-ташă –
Аталанан «ӳсен-тăран».
Тымарĕ ун пит авалтан!

Тупать халь тĕпчĕк йĕрсене...
Хăватлă халăх тăмхине
Çапать хурать чĕри çине!

Кăна курса кулать кӳрши:
«Кама кирлех-ши авалхи,
Пуçа ватса аса илни?»

Çăлкуç тапса тăрать куллен,
Хăйăрпала çĕклет мерчен.
Мĕн чухлĕ пуль ăна ĕçен?

Çук, вăхтран эп тĕлĕнмен.
Пĕр вĕçĕмсĕр, пĕр пек кунсен
Хăвачĕ курăнать иртсен!

* * *

Хуралнă ман алă, чулланнă чĕре...
Сана парăнап-и, ултавлă тĕнче?
Çитмен çĕре çитĕп, кĕретĕп чĕрре –
Теллейĕм выртать, тен, атте килĕнче?

Çил-тăвăл тустарчĕ, ӳкерчĕ çĕре.
Аçа-çиçĕм çапрĕ хуралнă чанне.
Çĕн туйăмлă пулнă тĕллевлĕ чĕре
Нихçан та сӳнтермĕ кăварлă вутне.

Сив çил çапăнать хĕрӳ çулăмла.

Чакса та пулин утап малалла.

* * *

Çул айккипе шупкалнă пусă.
Тин тунă йĕр тусан çинче.
Тăнлать тĕнче... Пĕр сас, пĕр утăм...
Тен, вăл пулать çын чĕринче?

Салху тĕнчен кăварлă чунĕ
Уçса кĕрет каç лаççине.
Мĕн-ма çĕтсе çӳрет ун тусĕ,
Мĕн-ма килмест вăл вут умне?

Уй варринче çавра çеç çутă.
Никам та çук ун умĕнче.
Пăхать çӳлтен хура каç кусĕ –
Шырать хăйне уй çутинче!

* * *

Çунат сарса çунать вут кусĕ
Сĕмленнĕ каçăн варĕнче.
Теме итлет хуралнă пусă
Тусанлă çулăн хĕрринче...

Вĕçет çилпе çуралнă çулăм,
Уçать кăвайтăн сăн-питне.
Чĕр туратран вĕри куççулĕ
Тумлать шап-шурă кĕл çине.

Хура хирте... Чĕр хĕрлĕ пăнчă,
Çавра çеç шанчăклă тĕнче.
Кама кĕтсе кăвар шăранчĕ,
Кама упрать хăй ăшĕнче?

* * *

Шĕл-кăвартан кăвайтăн чунĕ,
Çи-пуçĕ тĕксĕм кĕл-тусан.
Сив çумăр пĕрĕхтĕр кĕр кунĕ –
Шăнса вăл кӳтмĕ нихăçан!

Йĕри-тавра, тен, айăн-çийĕн
Хуплаççĕ шиклĕх хумĕсем?
Чăн, вăл çӳлте çуралнă тейĕн?
Чăн, вăл хĕрет шав хĕрнĕçем!

* * *

Тататăп чăтса
Чунри сăнчăра!
Пыратăп утса
Хура чăтлăхра.
Хăранă чĕре
Хĕвел пек çунать.
Чĕтренĕ ура
Юман пек тăрать.
Хыçра юлнă шурлăх
Çăтать тăллăма.
Таçта çиçен ырлăх
Туптать чунăма!

## *НИХÇАН СӲНМИ ЧЕЧЕК*

* * *

Аča чухне чечек пуххи тăваттăм,
Лартаттăм чӳрече умне.
Шап-шур çеçке... Пĕлсех тăраттăм,
Талса ӳкетчĕ урайне...

Çак тĕнчере нумай шыранă
Нихçан сӳнми чечек!

Кам чĕрине персе хăварнă –
Ăна тупаймĕ тек!

Ухмах пулни халь те пит лайăх.
«Чечек!» – тесе йĕреп.
Ман ывăçра... Ăша хывмалăх
Çунать пĕр пит нар пек.

Куçа хупсан та, тек куратăп...
Пĕлместĕп, тен, инкек?
Тинех татса чуна лартатăп –
Нихçан сӳнми чечек!

* * *

Тулли çут уйăх хăваратчĕ
Шур юр çине икĕ мĕлке...
Савни тени манпа пыратчĕ...
Кĕрсе юлать çав – тĕлĕке!

Асра юлать çап-çутă уйăх,
Асра юлать пăрлă сукмак.
Ун чух пулманччĕ пĕртте хурлăх...
Халь ма вара чунра пуклак?

Тытсам хулран! Ӳкме ан пар!
Ури шăват-çке ӳкмелле.
Ялан çапла пĕрле утар!
Телей патне-çке çитмелле...

Ури тесен, шуççан вăл шутăр...
Чунра ан пултăрччĕ шуçлак!
Çĕре ӳксен те пиртен юлтăр
Пĕрле утма çап-çут скмак.

* * *

Ас тăватни, епле пĕринче
Йĕкел çурĕ юман айĕнче?
Пат! çеç пат! çапăнать çĕр çумне.
Пат! та пат! тăкăнать сан çине.

Тĕнчере юмансем, юмансем...
Таврара вырăнпа йĕкелсем...
Мĕншĕн эсĕ тăкан вăрлăхна,
Кĕркунне, ан тивсем эс мана!

Иртсе кайрĕ йĕкел тăкăнни.
Иртсе кайрĕ тахçан кулянни.
Асăмра пĕр сас çеç упранать –
Пат! та пат! йĕкел тăкăнать.

* * *

Тӳпере тӳлек каç. Хура пĕлĕт хĕрри
Ялкăшать çулăмпа. Пур хĕвелĕн ури.
Пур таçта чĕнекен çутă кăмăл.
Иленкайăкăм ман, çунату епле çăмăл.
Килсе лар чун çине, çавăр ăшă йăва...
Ним те çук. Куç илмелĕх хăна
Аякра... Пушă хир. çил кăна.
Хирĕç мар тăвăла çырмари шур хăва!
Иленкайăкăм ман, кам шуйхатрĕ сана?
Килсе лар чун çине, çавăр ăшă йăва...
Тӳлек каç тӳпере. Çĕрпе пĕлĕт хĕрри
Ялкăшать çулăмпа. Çук хĕвелĕн ури.

* * *

Шурă уйăх пек, утать пĕр сассăр.
Ик витре – тулли çăлтăр çути.
Иртсе кайрĕ çаврăнса пăхмасăр –
Шăтса ӳсрĕ йӳçĕ армути.

Хăмăр куçлă ăш çунтармăш вутăш,
Темĕн кăтăклать ман чĕреме!
Пурлă-çуклă туйăмпа пĕр хутăш
Ăшăмра пуçлать тем вĕреме?

Тĕл пулсан мĕн-ма иртен чĕнмесĕр
Хăш енче йăву – тирпейлĕ çурт
Кантăк умĕнчен кайма пĕлмесĕр
Ал ĕçпе ларать килте хĕртсурт.

Мĕн тума мана кĕтмен куççулĕ?
Ас илмесĕр чăтăп пĕрех хут!
Халь анчах эс – чĕрери вут чулĕ...
Каярах – чунри пытанчăк çут!

* * *

Кăвак пĕлĕт тĕсĕ пур шур юр çинче.
Çуркунне сасси – эс калаçнинче.
Пĕрре çеç эс пăхрăн ман çине паян.
Кăвак хуппи уçăлчĕ. Пултăр çав ялан!

Телей çулĕ пур унта... Илейми илем.
Тарăнрах, пăхсассăн, пур тата та тем:
Юрату чĕртмелĕх чĕрери сăмах...
Мĕншĕн калаймарăм çавăнтах!

Уçăлчĕ те хупăнчĕ. Чĕрере кăвар!
Кăвак кĕртсем урлă юр ишсе каяр...
Аякри тĕнчен пек пур йыхравлă чун.
Ĕмĕре вăл юлтăр, кăвак куçлă кун!

* * *

Хула çийĕн паян Юркайăк вĕçет,
Тĕкне ӳкерет.
Ăна тем амантнă, куç кĕрет,

Темле шăхăрса вăл йĕрет.

Тем айăп чунра йăтăнать пек вара.
Такам хăпса тухнă каçхи сунара.
Сив çеç сăмахпа пĕрре çех перет –
Юркайăка пĕтерет.

Вăраххăн ӳкет тĕк ман алă çине.
Пăхса тăранаймăн сив хĕл тĕррине...
Мĕн чухлĕ выртать вăл ура айĕнче!
Мĕн чухлĕ пĕтет пуль чĕре çумĕнче?

Пĕрле эпир тухрăмăр кайăк тытма.
Пире илĕртет вăл таçта та кайма.
Çĕн çул çывхарса аякран ак килет,
Телей çукки çеç пĕтерет.

Хула çийĕн паян Юркайăк вĕçет,
Тĕкне ӳкерет.

* * *

Хурăн, теççĕ сана, шап-шуртан.
Хуран çеç курăнан эс паян.
Шурă юр çĕр çине тек ӳкмест,
Çавăнпа чун курма, тен, пĕлмест?

Çил ачи пек пулса шухăрах
Сан тавра пĕрре çех çаврăнам.
Сивĕ хĕл шурă юр тăктăрах...
Пурпĕрех эс хура курăнан!

Хуран çеç курăнан... Ку мĕн-ма?
Хура каç, тен, çӳлтен вĕçсе аннă
Кӳл хĕрне эп тухап уçăлма...
Шурă хурăн чăнах та хуралнă!

Шурă юр. Сивĕ çил. Пăрлă кӳлĕ.
Ушкăнра эс тăратăн пĕччен.
Кирек камăн та вăл асра юлĕ...
Шурă кун тухатать тĕттĕмччен.

* * *

Çул хĕрринче пĕр тĕмеске...
Шур юр çине ӳкет мĕлке...
Чуна тăм тытнă пек таçтан
Аса килет сап-сар вăрман.

Аса килет сап-сар кăмпа.
Тăватăп кăмпапа тупа!
Тахçан асамлă вырăнта –
Шур юр тата пĕр тунката.

Ларса канатăп пĕр кана.
Итлетĕп ватăлнă чуна.
Тем хускалать пекех шалта.
Çын пек ларать вĕт тунката!

* * *

Малтан унне куçне тăм илчĕ...
Кайран пачах курми вăл пулчĕ.
Шап-шурă хĕл пĕр сассăр килчĕ –
Çут тĕлĕкпе ман чунăм тулчĕ.

Вăр çаврака çеç симĕс куçлă
Пăхса выртаттăн пĕлĕте.
Санпа тахçан пулса эп туслă –
Çитсе курман ку чух пĕртте!

Хĕл сиввинчен ăшша тухсассăн
Пырса курсаччĕ каç енне...

Çил ачипе кăшт тĕл пулсассăн
Хум ывăтаттăн çыр çине...

Унтанпала ман алă çыхрĕ
Вил туйĕ хыççăн чĕрĕ туй.
Хĕлле каллех килсе ак тухрĕ –
Ман чĕрере вара пуш уй!

Ман куçăма та, тен, тăм илчĕ?
Çавра кӳлле курми вăл пулчĕ.
Шап-шурă хĕл пĕр сассăр килчĕ –
Çут тĕлĕкпе ман чунăм тулчĕ.

* * *
Чĕр туратран тытма хăрарăм...
Чĕтрет халь те тута хĕрри!
Мĕн-ма юр пек ларса юрларăн,
Çапла юрлать-и юр пĕрчи?

Унта çеç мар-ха та ун айăп...
Çук, вăрттăн шухăша пĕтерĕп.
Ӳкет çӳлтен пĕччен пĕр кайăк –
Хама унпа пĕрле вĕçтерĕп!

Чĕтревлĕ эп, енчен чĕр ӳтлĕ
Тĕнче пулать хĕл кунĕнче.
Тута çине шур пĕрчĕ ӳкрĕ –
Çав чĕпĕтет чун тĕпĕнче!

* * *
Пĕрле тиенĕ туйăм лавĕ
Тӳнсен ютçынлăх улăхне,
Пĕр шеллемесĕр чун хавалĕ
Таптарĕ ĕмĕт вучахне.

Кăшт ăшă сапнă кĕллĕ çиййĕ
Халь – кăвакарнă кив суран.
Сурса вĕрсессĕн шанчăк çилĕ
Тумланĕ çулăмлă сурпан...

Кив тымартан вучах турачĕ.
Çуралнă чунĕ – шĕл кăвар!
Иксĕличчен ăшри хăвачĕ
Çунтарĕ савăклă пушар.

* * *

Ман умра эс Турă пек тăраттăн...
Тем те куртăн пулĕ ку таран?
Пур чухне пурне те пулăшаттăн,
Çук чухне чунна, ак, хытаран.

Хăвна ху эс çĕнтерме çуралтăн.
Кăшт пулсан та йăл кулсам паян!
Унсăрăн тапмасть чĕре кăлт-калттăн,
Тем çитмест пек унсăрăн паян.

Тĕнчене эс çутатма пултартăн.
Сан хĕвре, тен, тепĕр хĕвел пур?
Курăнман пекех куçран çухалтăн –
Тăкăнать çӳлтен халь шурă юр...

* * *

Сăхăтпуç пикисем, çĕр çинчи çăлтăрсем,
Хăва пек авăнса тӳр ӳсеççĕ вĕсем.
Чĕр кулли çемçетет чул пек хытнă чуна,
Çĕр тăпах чарăнать пĕрле утăм тума.

Çĕн урам тăршшĕпе кивĕ юрă килет,
Инçетрен çывхарса ман чуна иленет.
Ах, пĕрле сирĕнпе çухаласчĕ çĕрле...

Мĕн чарать туртăма? Вĕресе эс кĕрле!

Ял ĕçчен хĕрĕсем, юмахри вутăшсем,
Ман чун витĕр тухса иртсе кайрĕç вĕсем.
Чĕр кулли янăрать халь тин сапнăн ăшра...
Вăхăт тăп чарăнать, хăварса йĕр асра.

* * *

Кам та пулин вуланă-ши сана?
Вуланă чух чуну, тен, илĕртӳллĕ?
Тухса тăрать, куç пăвнă пек, ума
Тем такама хыт кӳлешӳ е кĕлĕ.

Ак, темшĕн кашни кун эс ăшăмра хускалнăн,
Тем кайăк айăплăн пăхать пек хурланса...
Пур-мĕн чăвашра та телейлĕ Джоконда!
Анчах та кулать вăл, куççуль юхтарса...

Чăлах чунăмра пĕр хĕлĕх чĕтревлĕ.
Хур курнă савнин, тен, çĕнĕ кĕвви?
Тинех чĕрере çĕкленет пек вĕçевлĕ,
Пухса çыхăнать, тен, пурнăç тĕвви

Хăш чух тĕл пулсан, эс темĕн каласшăн.
Тен, пĕчĕк телей тапать куçунтан?
Чĕнсе пек сана пĕр утăм тусассăн,
Уçман кĕнеке куран умăнта!

* * *

Пĕрле чухне пĕччен çӳрерĕм:
«Сăнран илемсĕр эс!» – тесе.
Телей, тен, кӳршĕре пуль, терĕм,
Кусса кайма хатĕрленсе.

Пăхма çур утăм – эсĕ юлтăн –
Пит аякра алă пама.
Эп киличчен кĕтме эс пултăн –
Пĕлмест ăс-тăн çавна манма!

Юта кайсан, тинех ăнлантăм
Епле эс çывăх тăнине.
Чĕре пекех эпĕ юнлантăм,
Кĕрсе пырсан хĕл сиввине...

Таçта кайсан та эп тăварăп
Хам лашана сан кил умне.
Чун тĕпĕнчен туртса кăларăп
Чĕрен чи тĕрĕс юррине.

* * *

Пĕрмай сăнанă-ши сана?
Пĕрле чухне курмасăр иртнĕ...
Çавах та ырă кăмăлна
Аса илсен, телейĕм çитрĕ.

Иртеççĕ паянхи кунсем
Пĕр улшăнмасăр юмахри пек.
Нихçан та çĕтес çук вĕсем
Ман чĕрере. Вăл халь кăвар пек.

Ахаль чухне, килте, ĕçре...
Эп пурăнатăп çын çинче.
Йăлт ывăнса çитнĕ çĕре
Сан сăнару куç умĕнче!

Сăмси те пĕчĕк мар курма.
Ачаш та куçĕ пысăк мар, тен?
Анчах та кăмăлĕ вара...

Тин çеç çуралнӑ пирӗштин пек!

Сан сӑнару ман умӑмра,
Нихçан манассӑм çук ӑна.

* * *

Юлашки эс манӑн, юлашки...
Пурӑнӑç пусмин пӗр картлашки.
Санпала анчах кӑшт калаçатӑп,
Пӗр сана анчах чунпа куратӑп.

Юлашки эс манӑн, юлашки...
Ӗмӗр иксӗлми шыв валашки.
Санпала анчах юрра пуçлатӑп,
Пӗр сана анчах çумма лартатӑп.

Юлашки эс манӑн, юлашки...
Халь тин тулнӑ юрату курки!

* * *

Санпа юнашар пулнӑ чух
Чи тӗттӗм каçсем те кӑшт çутӑ.
Эй, юх эсӗ, çил евӗр юх!
Кӗрхи кун пекех эпӗ тутӑ!

Шӑпа кукӑртать кун-çула?
Вӑл пултӑр чуна канӑçмалӑх.
Тӳлек çывӑрать мӑн хула...
Пур вӑй пирӗнте вӑратмалӑх!

Санпа юнашар тӑнӑ чух
Чи тӗттӗм каçсем те кӑшт çутӑ.
Телей, ман тӗле йӑтӑнса эсӗ тух!
Тӗнче, мӗн-ма эсӗ ютӑ?

* * *

Каç чунлă пулĕ – чарăнмарĕ
Шур юр тăкма ман пуç çине.
Темле пулсан та хуплаймарĕ
Çула, хăварчĕ хыттине.

Вăл чарăнать тесе шутларăм,
Канма пĕлмесĕр утнă чух.
Кӳлĕ тавра миçе хутларăм?
Самантлăха пулин те тух!

Икĕ тĕнче, ик тĕрлĕ туйăм:
Пĕри пулать тăр кăнтăрла.
Тепри килет пĕрмай каçкӳлĕм,
Куçа хупсан та курмалла.

Каç чунлă пулĕ – чарăнмарĕ
Шур юр тăкма ман пуç çине.
Ăна никам та ăнланмарĕ –
Телей çăвать-мĕн каçхине!

* * *

Халь тин мĕне вăл пĕлтерет?
Каллех мана тĕлĕнтерет.
Вĕçет шур кайăк пек умра –
Ун юррине юрлать йăмра.

Шур юр çăвать, шур юр çăвать!
Ман чунăма вăл шуратать...
Мĕн-ма тесен, вăл юратать,
Тен, çавăнпа хĕн-хур курать?

Шур юр çăвать, шур юр çăвать...

Ман пĕвĕме вăл явăнать.
Хура çĕре йăлтах хуплать.
Тен, Хĕл Мучи халь куç пăвать?

* * *

Тăр кăнтăрлах хĕвелĕм анчĕ.
Тĕнче, тен, ача пек кулянчĕ?
Хĕлле хуçа пек хуçаланчĕ,
Хула урамĕ те пушанчĕ...

Мĕн-ма мана çак пăлхантарчĕ?
Ман чĕрене йăлт шуйлантарчĕ?
Анать хĕвел вăрман хĕрне...
Шевли ӳкет сан пит çине!

Хыпса илейтĕн шăл-кăвар.
Санпа тăма халь çăмăл мар!
Атя, пулатпăр пĕр кавар?
Çук, кирлĕ мар. Тем тăвар мар.

Анчах та темĕн пур тата
Сан çумăнта та аякра...
Таçта кайма пур ухата –
Пĕр çăлтăр тухрĕ тапăра!

Çунать анчах вăл ман çумра.
Чечек çурать пуль шăн йăмра?
Мĕнрен килет ку япала?
Анать хĕвел тăр кăнтăрла!

* * *

Нумай та кирлĕ мар мана.
Эп пĕчĕк çын анчах.
Юхса кĕрет телей юна,
Пĕлмен ăна пачах.

Çумра кăна тăма эп ыйтрăм.
Эс килĕшрĕн аран-аран.
Пĕр минут мар, çур ĕмĕр тытрăн
Ман чĕрене эсĕ паян.

Тен, çавăнпа эп кайăк чунлă,
Ĕмĕтпеле хăюллă пит.
Чĕре варне эс халĕ юлнă.
Халь тин шутлатăн: «Ну, камит!».

Апла пулсан та эпĕ пысăк.
Нумай ыйтмастăп-çке тата...
Пĕр хурăнăн турачĕ хуçăк,
Теприн вара, кур, яштака!

* * *

Татах çак саманта тăсасчĕ.
Ĕмĕрлĕхе пулинччĕ вăл!
Тĕл пулăва картса хурасчĕ.
Пур пек унра асамлă вăй!

Сана тахçан эп каласаччĕ:
«Пĕрле пулни телей!» – тесе.
Эс ун чухне темрен кулсаччĕ,
Ик аллуна хĕреслетсе.

Куçа хупса та пуль тăратпăр.
Тăсасчĕ саманта тата.
Тĕл пулăва картса хуратпăр –
Чĕре пĕлет пек çак шута?

* * *

Каллех хĕлле. Каллех пин шухăш.

Пĕр пысăк туйăм чĕрере.
Хытса тăратăп пек пĕр хушă,
Хампа хамах кĕреп чĕрре...

Санпа пулма епле пăлхавлă.
Епле черчен халь хурăнсем!
«Сив хĕл килет паян тăманлă!» –
Пăшăлтатаççĕ тутусем.

Ман куçăмра вара кăваклăх.
Кӳл хĕрринчи хĕвел шевли.
Юр ӳкнĕ те... пин-пин шăрçалăх
Пуçтарăнать варли валли.

* * *

Чунра – хама çеç курăнмалăх –
Çавра çеç кӳлĕ. Ешĕл сад.
Ир-ирпеле чупса тухмалăх
Пĕртен-пĕрех çинçе сукмак.

Кӳл хĕрринчех пĕртен-пĕр хурăн,
Ытла та шуррăн курăнать.
Кӳл хĕрринчех çӳрет ман туррăм.
Телей теме, тен, юрать?

Эп ун патне ĕмĕтленеттĕм
Кунран-куна тек çывхарма.
Çук, аякран та киленеттĕм –
Аванччĕ шухăш çавăрма!

Паян вара шăпа шăпланчĕ.
Хирмест вăл тек ман пурнăçа.
Кӳл хĕррине çитсен лăпланчĕ
Чĕре ман – хурăнпа хуçа!

Хуҫа пӑртак ыталамалӑх,
Куҫ хӳрипе кӑштах пӑхмалӑх...
Нумай пулман сан ҫумӑнта!
Ҫук ҫылӑх манӑн тек унта.

Ман чунӑмра ку – курӑнмалӑх –
Ҫавра ҫеҫ кӳлӗ. Ешӗл сад.
Кунран-кунах чӗре сурмалӑх
Хурӑн хушать турат!

* * *

Шур пӗвӗ хӗвӗме хупмалӑх.
Сар ҫӳҫӗ тӑвӑлпа тулмалӑх.
Ӳсет кунпа пӗр тан
Пӗр хурӑн – тӗлӗкре те ман!

Анчах та эп ун патӗнче
Нихҫан та хӑнара пулман.
Ҫӳрет вӑл кӳлӗ хӗрринче
Ҫил ачипе – тӑван!

Шыв ҫийӗн тайӑлса пӑхма
Турат хушсам тата!
Санпа пӗрле, пӗрле тӑма
Хал ҫук ман, тупата!

* * *

Пӗр туйӑм пур пек чӗрере...
Йӑлт тухатать ҫак тӗнчене.
Эсир шутлатӑр: «Пӗр хӗре
Вӑл тӗл пулса, тен, кӗр енне?».

Ҫапла пуль те, апла та мар.
Кӗр хӑй килет ҫапла капмар!
Пӗр кулянать, пӗр киленет –

Таçта инçе кайма чӗнет.

Паян та, акӑ, ирпеле
Тухса тӑратӑп çул хӗрне.
Тӗтре хуплать сар хӗвеле –
Пӗлетӗп эп телей тӗлне!

Ёнер те, акӑ, пуш çулпа
Сенкер те сивӗ куçлӑхпа
Çӳреттӗм каçхине пӗччен...
Епле пулса мана кичем!

Халь тин вара пур пирӗшти,
Мӗнрен-темрен те шапӑлти.
Пӗрре кулать, тепре юнать –
Пӗрле çанталӑк улшӑнать...

Мӗншӗн тесен кӗртен тухать:
Е юр çӑвать, е çил юхать –
Пурне те вӑл халь пултарать.
Ман кӑмӑла та çавӑрать!

## *ХӖРӖХӖМӖШ ХӖЛ*

* * *

Хӗлле те пулать çут хӗвел.
Чи тӗттӗм каçсем те кӑшт уçӑ!
Упратӑп ӑшра сар çӗмел –
Çурхи кунсенчен те вӑл çутӑ.

Çӗмел ман тӗнче, çӗмел пӗчӗк мар.
Пӗр хӗрӗх кӗлте тата хурса пар.

Уйра вӗри çил... Татах аса ил!

Ăшпиллĕн туртать тĕп кил.
Алкум тăррине пăрахнă çурла...
Юрла калинкке, юрла!

Çĕмел ман тĕнче, çулсем сахал мар.
Пĕр хĕлĕх кĕлте тата хурса пар.

Тухатăп уя. Чунра теветкел.
Ача чухнехи пек чун уçă!
Упратăп ăшра кĕрхи сар çĕмел –
Çурхи кунсенчен те вăл çутă.

Çĕмел ман тĕнче, тĕнче пĕчĕк мар.
Пĕр хĕрĕх кĕлте тата хурса пар.

* * *

Телей ман яланах çӳлте...
Ача чухне те, çитĕнсен те
Кураттăм çăлтăр çунине –
Çăлтăр çăватчĕ каçхине!

Пит аякра йăлт-ялт çиçетчĕ.
Пăхаттăм питĕ тĕлĕнсе.
Анне хĕрес хурса илетчĕ:
«Çын чунĕ татăлчĕ», – тесе.

Такам шăпи пĕррехинче –
Пĕр çăлтăр ӳкрĕ ман çине.
«Пĕлтерĕр Çеçпĕл Мишшине!» –
Пĕр сассăр кăшкăртăм инçе.

Кам илтнĕ ăрăс сассине?
Кам курнă вилĕм çунине?
Тăкать тĕнче хăй сутине –
Пĕри ӳкет ман пуç çине!

* * *

Кĕрхи хĕвел кăштах ăшши
Ман чĕрере те пур-тăр халĕ?
Юхать манми кунсен ташши...
Çук, ӳсĕнмест тек чун хавалĕ!

Çĕре ӳксе çине-çинех
Юнпа куççулĕ кăларсан,
Усал тасалчĕ тин... Тинех
Пусăрăнать шалти тусан.

Пĕрре çапла пĕрле ларса,
Кăштах уçасчĕ кăмăла.
Теме манса эс хăварса?..
Тупсам шалти çут-тăвăла!

Кĕрхи хĕвел кăштах ăшши
Ман чĕрере те пур-тăр халĕ?
Вĕçет кăвар вăрман тăршши –
Çук, çулçă турата чĕртеймĕ!

* * *

Мана каçмасăр юрамасть.
Эп кирлĕ мар, тен, ку енче?
Чĕнет мана урăх тĕнче.
Анчах каçма...
Каçма çинçе!
Чĕтрет пĕрле çемçе чĕре...

Пăхса тăратăп аякран.
Вăя пухатăп пĕр кана...
Чупса пырап каçма патне.
Пусма тăрап...
Мĕнрен хăран?

Шеллен хӑвна?..

Мана каҫмасӑр юрамасть.
Эп кирлӗ мар, тен, ку енче?
Чӗнет мана урӑх тӗнче.
Анчах каҫма...
Каҫма ҫинҫе!
Чӗтрет пӗрле ҫемҫе чӗре...

* * *

Эрне ытла эп ҫӗр чаватӑп.
Хресчен пекех хама туятӑп.
Ҫурхи сывлатӑп сывлӑшпа,
Чун тӑранать савӑнӑҫпа.

Ҫак ҫутӑ тӗнчере
Ҫӗмӗрт шап-шурӑ ҫеҫкере!

Кашличӗне кӑшт тутанатӑп.
Кӑшт ывӑнсан выртса канатӑп.
Шӑпчӑк пӗлмест пуль ывӑнма?
Турачӗ пур ун ярӑнма...

Ҫак ҫутӑ тӗнчере
Ҫӗмӗрт шап-шурӑ ҫеҫкере!

Иленчӗ шӑпчӑк йӑвине.
Тек шӑхӑрмасть хӑй кӗввине.
Лӑпкать ӑш ҫил пӳрт тӑррине.
Вӗҫлерӗ чун ҫуракине!

Ҫак ҫутӑ тӗнчере
Ҫӗмӗрт шап-шурӑ ҫеҫкере!

* * *

Тепĕр утăм малта. Хыçалта ним те çук!
Пушатмалăх лава тиеме, тен, эс мантăн?
Халь тин çеç, тен, çынна ытла шантăн,
Туртайман лашине тăвалла тĕртес çук...
Пурпĕрех!
Çурхи шыв пек кĕрлет тин çеç лăпкă пĕве.
Татса ячĕ чĕре тытса тăнă кĕвве!
Тепĕр хут пĕвене чĕрĕ шыв тулмасан,
Юлтăрах чун тĕпне хура юшкăн!

* * *

Юрлать Нарспи...
Арлать пек каçхине анне.
Хуçать пек çăпата атте.
Хăйă çунать те, чăшш! сӳнет.
Сас-чӳ тин хăлхана кĕрет.

Юрлать Нарспи...
Чĕв-чĕвĕл чĕкеçсем вĕçни,
Чуна канмалăх шыв ĕçни,
Ачалăхри сукмак хытти
Тăрать асра кунта çити.

Юрлать Нарспи...
Хĕрпе пĕрле хӳхлет тĕнче.
Сетнерĕн харсăр чĕринче
Çĕр тĕрлĕ шухăш çуралать –
Хăй телейне вăл çухатать.

Юрлать Нарспи...
Таçтан ăшран вăл сас илет.
Мĕн-ма мана çеç илтĕнет?
Куратăп тĕнчере тивлет.

Чĕре çинех вăл халь ӳкет!

* * *

Пĕлмен вăл мана, нихçан та курман.
Пуласлăха çеç асран кăларман.
Ирпе ирех тухнă вăрлăх акма,
Алла çурла тытнă тырă вырма...

Эп ӳсрĕм, çын пултăм... Малашлăх, тăхта!
Ак, эпĕ те пуçлăп сана туптама.
Акма тесе тăтăм... Ман вăрлăх ăçта?
Вырма тесе пăхрăм... Çухалнă çурла!

Ал усăнчĕ, ӳкрĕ. Çын кулчĕ манран.
Ак, пĕтрĕмĕр, терĕмĕр, пилĕм çукран.
Пулас ачасем атте теес çук,
Мăнук таврашсем кулач çиес çук...

Ирпе ирех тăтăм... Тухатăп уя.
Ман пурнăçăм пулнă, тен, суя?
Тăван çĕршыв тăрăх утса эп тухап,
Санпа, асатте, ĕçпе калаçап.

* * *

Паян ирпе шăнтса пăрахнă.
Пăр карнă шыв валашкине...
Çил ачисем кĕрсе вырнаçнă
Пас тытнă пӳрт кĕтессине.

Чĕртес тесе, чупа пуçларăм,
Ăшă кĕртес сивĕ пӳрте.
Вут çыппине касса вакларăм –
Пĕлмен епле çĕрĕккине!

Чăнах та, малтанрах хаваслăн

Хыпса илет турат хуппи.
Кăшт тăхтасан, шăнтса яраслăн,
Выртса юлать тусан купи.

Хевтесĕр–мĕн вут пуленки!
Ăш тĕтĕм явăннă çĕрте
Мĕлтлетрĕ пек тем йăлтăркки...
Чун тем тухатрĕ çав тĕлте!

Мĕн хускалма пĕлес тата
Шур илчĕ пӳрт чӳречине.
Кĕлленнĕ сивĕ вучаха
Эп ывăтап хам чĕрене...

Çунах вучах, кăвайтсăрах!
Тĕнче ăшши çынра анчах!
Кăвак хуппи пек йăлтăрса
Хыпса илет ман чĕр вучах...

* * *

Парăр мана, чун выçă.
Ыйткаласа çӳретĕп.
Ăшă сăмах – пĕр пĕрчĕ –
Чĕре сури пулинччĕ!

Мĕншĕн пĕртте чĕнместĕр
Элле сирĕн чĕре çук.
Чул хушшинче пурăнма
Манăн чăтăм пĕтес çук!

Парăр мана, чун выçă.
Ыйткаласа çӳретĕп.
Ăшă сăмах – пĕр пĕрчĕ –
Чĕре сури пулинччĕ!

Кӳтсе çитнӗ чӗресем
Текех кӑмӑл хушас çук.
Тахçан талнӑ чӗлхесем
Ӑшӑ сӑмах калас çук!

Парӑр мана, чун выçӑ.
Ыйткаласа çӳретӗп.
Ӑшӑ сӑмах – пӗр пӗрчӗ –
Чӗре сури пулинччӗ!

Ыйткалакан тесе-ши,
Çапрӗç ячӗç сӑмахпа.
Ыйткалакан тесе-ши,
Тапса ячӗç атӑпа!

Парӑр мана, чун выçӑ.
Ыйткаласа çӳретӗп.
Ӑшӑ сӑмах – пӗр пӗрчӗ –
Чӗре сури пулинччӗ!

* * *

Тӑваттӑн урапа тапаççӗ
Йӗри-тавра тӑрса тухса.
Тӑр-р! чӗтресе иртсе каяççӗ
Хӑравçӑсем куçа тартса.

Эс такӑнтӑн, тен, чӗрӳпе?
Хушша кӗме тӗвӗ тӑван...
Ак, тапӑнаççӗ кӗтӳпе
Сан çинелле тӑват куштан.

Кӑна курсан тарап кӑна...
Тапман мана çын атӑпа!
Чӗре сисет çук сурана...

Епле сирес çак айăпа?

Эп пулăшма пыма пĕлмерĕм,
Юлташсене те эп чĕнмерĕм.
Тискерлĕхрен тарсан кăна,
Кĕрсе пыратăп пек тăна...

Хам чунăма шелле-шелле
Утап каçхи урампала.
Мĕнле çитсе ӳкес киле?
Мĕнле тата пурăнмалла?

Чĕре пĕр чарăнми тапать.
Унта таканлă йĕр юлать.
Тапман мана çын атăпа!
Мĕнле сирес-ши айăпа?

* * *

Кĕрхи каç чĕрере шиклĕх карчĕ.
Çавра çил, тем, пӳлет пек çула?
Такăр мар. Утăмран такăнтарчĕ.
Çаврăнать çеç чунри кустăрма...

Чăн малтан, курсанах, эп шутларăм:
«Ку, темле вупкăнла япала!».
Вĕтлĕхрен, тен, тĕмрен ӳссе ларнă? –
Хура йытă сыхлать утăма.

Тĕттĕмре кăварланнă ик куçĕ –
Сив чир ернĕ тĕнчен, тен, çути?
Çил çинче çĕтĕлет çăмлă тумĕ...
Таврара йăтăнать каç пултти!

Кустăрма шăппăнрах тăкăртатрĕ...
Чăтаймастăп чĕнмесĕр йытта!

Хӳрипе ку вара пăлтăртатрĕ –
Йăпшăнать ман пата, тупата!

Пĕр самант, ак, ăна эп сăнатăп,
Тăскалатăп алла... Лăпкатăп пуçран...
«Такам тем курмасть-и? – тесе пăхкалатăп,
Хăратăп çынсем хамран куласран.

Хаваслăн сиксе, йыт вĕрсе чунне уçрĕ,
Сывларĕ вĕри сывлăшпа çăвартан.
«Хуçа-ши? – тесе, тен, паллам пекки турĕ,
Пылчăк урипе çăт! çапса кăкăртан.

Темле çутă туйăм çĕкленчĕ шалтан...
Йытта алăпах çупăрлатăп малтан.
Кайран тем пирки тĕртсе ятăм çумран.
Хăрарăм пулас хама варласран.

Манран хăраса тарса ӳкрĕ чĕрчун.
Хура çул çинче тăрса юлчĕ пĕр çын.
Алри йăнăша ăнкарса иличчен
Чылай вăхăт иртрĕ. Вăл иртрĕ пĕччен!

Кăрт-карт кускалать халь чунри кустăрма.
Таçта пек улать хура йытă хыçра.
Пустуй пуль çӳретĕп ăна йыхăрма –
Тĕтреллĕ каçхи çул выртать ман умра.

* * *

Ăшăхра та ишнĕ,
Тарнă тарăнран.
Шурлăха, ак, ӳкнĕн,
Тем, тапаçланан?

Ухмахран та ăслă

Калаçан ялан.
Пуянран та чухăн
Халь тăрса юлан.

Пулнă эсĕ турă –
Шуйттанпа пĕр тан.
Халĕ тин санран
Нимĕн те юлман!

* * *

Çывăрать лăпкă çын, хускалмасть те.
Çисе тултарнă, какăрать.
Ăшĕнче вăштăр ăшă çил вĕрет.
Ыйхăлать лăпкă çын. Куçне хупнă.
Кам ăна шăппăн пырса чĕртĕ?
Хаяррăн кăшкăрса шарт! вăратĕ?

Эй, тепĕр енĕм!
Сан çине анчах ман шанчăкăм.
Вăрат мана.
Ăнсăртран, сисмен хутран питрен çупса яр.
Ман чун ыратнипе йĕрсе ятăр.
Ăш-чик хускалтăр.

Мĕскĕн çын нăйкăшса илет.
Вăл пĕчĕкрен те пĕчĕк пуласшăн.
Вăл хирĕç тăрасшăн мар.
Вăл тĕссĕр çанталăк.
Пуç çине ăшă çумăр çăвать.
Тĕтре... Лайăх.

Эй, чун тĕпĕнчи тепĕр енĕм,
Тух кунта!
Вăрат мана.
Пĕтĕм вăйупа çĕр çумне лапчăт.

Тапта мана, ват, нимĕр...
Çĕнĕрен тăм ту!

Кайран вара?
Кайран, хирĕç тăнăçем, çирĕпленсе пырăп,
Хурçă касăп.
Мĕн чухлĕ мана ватăн, çавăн чухлĕ
çирĕпленĕп.
Мĕн чухлĕ хивре сăмах ярса çапăн,
Çавăн чухлĕ тасалăп.
Асап тӳснĕ çын улăпран та аслă теççĕ.
Вăл чаплă.
Уйрăммăн эпĕ тĕлĕрсе выртатăп, мăкалатăп,
мăкланатăп.
Тикĕтпе çу мана, тăвăлпа çап, хĕвелпе
çунтар!
Чун хытса çиттĕр, алă чуллантăр, куç хĕрсе
пăхтăр.
Эй, тепĕр енĕм! Сан çине анчах ман
шанчăкăм...

* * *

Ман хăватăм хама кура.
Кăмăл вара кăра.
Чупса каятăп та ӳкетĕп.
Чĕнмесĕр выртатăп.
Хăват ӳснĕçем ӳсет...

Нумайччен хăш чух выртатăп.
Пуçра шухăш çавăратăп
Пурнăç çинчен, хам çинчен...
Ӳкмесĕрех çын пулаймăн,
Йăнăшмасăр ăс пухаймăн...

Майĕпен ура çине тăратăп.

Татах такӑнатӑп!..
Вӑй ҫитменни пӗтерет, тем?
Вӑйлӑ пулма вӑхӑт!
Ҫӗр ҫинче пурӑнатпӑр вӗт!

Эп хӑватлӑ хама кура.
Кӑмӑл вара кӑра.
Пӗр такӑнатӑп та, пӗр ӳкетӗп...
Тем, тепӗр утӑм тума
Тӑхтаса тӑратӑп.

* * *

Хама ҫын пек эпӗ туятӑп...
Ҫапла пӗр пӗчӗк ӗҫ тусан,
Таҫта ҫити вӗҫсе каятӑп
Хампа пӗрле пӗччен юлсан.

Анчах та темшӗн тепӗр чух
Ниҫта кайса кӗме те ҫук.
Тума пуҫланӑ ӗҫ ҫине
Пӑхса тӑратӑп... Ҫӗр тӗпне!

Мана-и кирлӗ ҫак тӗнче?
Эп пурӑннӑ чылай писсе.
Янрать алра пуш кӗленче...
Пите ҫӗленӗ пек кӗҫҫе!

Туйман эп кӑкӑр хӗснине,
Курман куҫҫуль юхтарнине...
Тахҫантанпах, ак, ас тумас
Каҫса кайса савӑннине...

Ҫӗн сывлӑш кирлӗ. Уҫӑ варкӑш!
Ҫын ҫынлӑхне ҫӳлте тытар!
Пӗр тытӑнсан ӗҫе пӗр харӑс,

Çуртсем ӳсеççӗ пит капмар!

Пӗрре çеç кӑкӑрӑм сывлать,
Сӑн-питӗме хӗвел тухать.
Хама çын пек эпӗ туятӑп.
Пӗр пысӑк ӗç тытса тӑватӑп!

* * *

Çул иртнӗçем,
Çак тӗл пулу саманчӗ
Кӗрлет хӑватлӑ ахрӑм евӗр,
Ас тунӑ чух аттесене.
Вӗсен чӗри ман кӑкӑрта
Пӗр тапхӑр
Тапать пӗр харӑс.

Тӗнче касса,
Тӳлек те лӑпкӑ пурнӑçра
Çӗршыв уй-хирӗпе
Çӗтсе çӳрерӗм.
Юлташсемпе пӗрле
Нумай килентӗм.
Кил юлчӗ аякра...

Çыхӑнтарма çитет пуль вӑхӑт
Сукмакӑма атте çулӗпеле...
Мухтавлӑ çӗнтерӳ кунне
Асра тытсан,
Шӑтать ман чунӑмра черченлӗх.
Хӑватлӑ туйӑмпа утатӑп тин
Атте çулӗпеле!

* * *

Пит шавлӑ тӗнчере пӗр сас:
«Çынпа вӑрçмасӑр пурӑнас.

Парсан илес, çапсан тарас –
Тĕттĕм кĕтес пире хавас...».

Мĕнле апла эс пурăнатăн,
Епле чăтатăн шăплăха?
Пĕрре кăна хирĕç тăмашкăн
Чунра капланмĕ-ши хавха?

Пулсан пурах вăл. Ан пытар!
Пĕр сасă та пулин кăлар.
Куккук пĕччен, ав – авăтать,
Кичем вăрман хавас тăрать...

Пĕлетĕп, шăплăхлă тĕнче –
Шарт! çурăласлă кĕленче –
Кĕтет чăн-чăн сăмахăма.
Эп йыхăратăп тăхăма...

Пĕрле пулар, пĕрле юрлар,
Пин сасăллă тĕнче тăвар!
Çурать ман кăкăра пĕр сас:
«Эпир вĕт халĕ те çăвaç!».

* * *

Çынран килет, çын тăвать.
Пĕтĕм ĕçе çын курать.
Пит тĕлĕнмелле çакă тĕнчере!
Ăнланма пăрахрăм хамăн чĕрене.

Шухăшлама ман чĕре манса кайрĕ
пулмалла.
Тапасса та вăл тапать темле халĕ урăхла.
Кашни кунах эп килте кино курса
ларатăп...

Ларнăçемĕн майĕпен чул пек хытса каятăп...

Тен, çавăнпа çын ĕçне хакламасăр пăхатпăр?
Калас тенĕ шухăша ăша хурса тăратпăр.
Кашни калас сăмахне тытать чĕлхе вĕçĕнчех!
Мĕн-ма кăштах юрруна пуçламастăн çийĕнчех?

Çынран килет, çын тăвать.
Пĕтĕм ĕçе çын курать.
Пит тĕлĕнмелле çакă тĕнчере!
Кам тытса тăвать-ши пирĕн ĕçсене?

* * *

Ăçта утмалла-ши, кампа каймалла,
Мĕнле ĕç туса ман çын пулмалла?
Хам тĕллĕн утса тĕллевсĕр çулпа
Пĕр йĕрсĕр çухалăп ирхи сывлăмпа...

Чунри сукмакпа тухап мăн çула...
Чупать хура халăх унта-кунталла.
Ăнлан-ха, юлташ, кампа каймалла,
Ертсе каякан ман çук пулмалла?..

Тăратăп çĕтсе айван ăс-тăнпа.
Хăватлă сасса тăнлатăп чунпа:
«Ан тăр эс хытса, шав ут малалла,
Ялан халăхпа пĕрле пулмалла!».

Çынсен ĕçĕнче вăрттăн вăй упранать.
Вăл тĕрĕс çулпа илсе чуптарать.

* * *

Кунран кунах хама хистерём
Хăюллăрах пулса çитме.
Юратура пĕр хăрамасăр
Шырарăм пурнăç асапне.
Тăван çĕршыв, тинех çуралтăм
Ăша илсен çак тĕнчене!
Ман тĕнчере, кĕрсен куратăн,
Ялсем унта, тем чул хула...
Çыр хĕрринче кашлать вăрман,
Çиле итлет авăк хăва...
Атте унта, унта ман йăх –
Вăл хатĕр тĕпретме тăва!
Çĕкленчĕ чун, çакна курсан –
Татах та эсĕ хăватлан!
Юрлать сухаçă майĕпен,
Суха тума ăна аван...
Шырать ман куç тăваннлăха...
Епле эп курăнап айван!
Каçа юлса пирĕн пата
Килсе кĕрейрĕç паттăрсем...
Чунри чи тарăн илеме
Уçса кăтартрĕç хăрхăмсем!..
Хастаррăн тĕлкĕшен куççем,
Çунса кĕлленмĕç тек вĕсем!

* * *

Хыт хирĕçӳ упрать тĕнче
Хăй ăшĕнче.
Шырать чĕр шыв вар тĕпĕнче
Хăйĕн çулне.

Çук, юратмасть хирĕçнине

Манӑн чӗре.
Пӗрре ҫапла халь ҫырнине
Хӑват ҫитмест чӗрме.

Итле, епле чӗр сасӑсем
Халь шӑратаҫҫӗ кайӑксем!
Тӗнче пӗр карӑмлӑ ялан –
Аван паян.

Аван паян юлташпала
Пӗрле ҫапла ларма.
Пӗрне-пӗри килӗштерме,
Ӗҫре пӗрле пулма...

Телей те мӗн йӑлӑхтарать.
Тавай пӗрле вӑйма!
Куҫатпӑр тӑвӑлпа пӗрле,
Пӑхатпӑр пуҫ пулма...

* * *

Пур пурнӑҫӑн илемлӗх мелӗ...
Пур, курӑнать, пӗрпеклӗх сӗмӗ –
Пӗр пек ҫынсем, пӗр пек тумсем,
Пӗр урамри пӗр пек ҫуртсем...

Пӗрпеклӗх иленет пире?
Тивмест ун чух сив чир тире!..
Тен, пурӑнма ансат тесе,
Пӗр пек тӑватпӑр пур ӗҫе?

Тен, ҫыннисем пӗр чустаран?
Ӑс-хакӑлне улӑштарман...
Ҫул хӗрринчи ҫавра ҫӑка –
Вӑл та пулин йӑлт ҫавракa!

Мĕн пулчĕ, тетĕр, чунăма?
Вăл васкамасть урăхланма.
Мала тухма тăхтать ăста,
Пĕр пек пулма васкать ача.

Эп ăнланатăп пек ăна.
Эп тытăнап хама ватма.
Çĕр шухăш çаврăнать пуçра,
Пĕр туйăм канăçсăр чунра:

Пĕр тĕрлĕ чун – вăл пĕтнĕ чун,
Пĕр майлă юрă – чухăн çул.
Пĕрпеклетме çын юратать
Пурне те пĕр пек кастарать!

* * *

Тахçан тухатнă кив тĕнчен
Çĕтсе пыраççĕ паллисем.
Тасатнă кӳлĕ тĕпĕнчен
Текех тухмаççĕ вутăшсем...

Ал ĕçĕпе лармасть анне,
Ăста ĕçне тумасть атте.
Ача туймасть çанталăка –
Çуралнă вăл пĕр талăка.

Пĕлмест вăл хăйĕн несĕлне,
Тек шырамасть ăру çулне.
Мĕн-ма ăна чăваш тĕрри?
Чунне илет чăваш турри!

Ун вырăнне çĕн çăлтăрсем
Çутаççĕ тӳпере çынсем.
Çĕнни килет – кивви вилет.
Кам ăнланма ăна пĕлет?

Кам тăнлама ăна пĕлет,
Ăçтан çав çыхăну килет?
Вĕçет хур-кайăк кил енне –
Вăл ас тăвать йăва тĕлне!

* * *

Шутланă-мĕн эп тĕрĕсех!
Мĕн-ма чĕнмерĕм вăхăтра?
Ман вырăна, çӳле сиксе,
Куштан калаçрĕ пухура.

Сăмах лармасть карланкине.
Пĕлмен мĕн-ма тăрăшнине –
Укçа, мухтав, пылак мемме
Хăйне çеç кирлĕ пулнине...

Виçеллĕ, вырăнлă сăмах
Епле халь кирлĕ халăха!
Темрен хăратăн пулмалла?
Аран пуçларăн калаçма...

Чĕкеç пекех чĕлхе вĕçне
Вĕçсе килет вăл тепĕр чух.
Çунат çапса юрланине
Кам илтнĕ пуль ку чух?

Пур юмахра кĕрен чечек.
Пĕрре çурать вăл çеçкине!
Тухать сăмах хĕвел пекех –
Çути ӳкет-ши сан çине?

* * *

Чăвашăн чунĕ упранать
Çемçе чĕлхийĕ вĕçĕнче.

Кăвар пекех вăл шăранать
Тăван сăмах вучахĕнче.

Çилентерсен, усал çине
Хум хыççăн хум вăл ывăтать.
Чĕрен чечеклĕ кĕввине
Тăван пулса, тен, кăларать?

Пĕр савăнса, пĕр хурланса,
Сăнать чăваш хăй кун-çулне.
Тăрать вăрманĕ ватăлса,
Тăрри ӳсет хĕвел çине...

Шутлать куккук çын шăпине.
Пĕр чарăнать, пĕр авăтать.
Килет телей пуç тӳпине.
Мĕн-ма чĕре ман ыратать?

Мĕн-ма тăратăп пуç тайса?
Вĕçет куккук куккукласа.
Юлать ман чун тăвăрланса,
Кăвар çунать кăмрăкланса...

* * *

Пур манăн пĕр чир. Чĕтрет чĕрĕ тир.
«Шăнса пăсăлман-ши, ку» – тетĕр?
«Касу, – тет, пĕри. «Грипп», – тет, тепри.
Тӳссе курнисем, тен, пĕлетĕр?

Çынсем умĕнче пуçа çĕклейми,
Тăратăп хытса пĕр сас-чĕвсĕр.
Пит йывăр иккен шăпа çĕклемми...
Чăваш, эс ытла та пит чĕмсĕр!

Пăрахрăн та кайрăн. Çĕр юлчĕ йĕрсе,
Çырмаллă-пӳрнеллĕ усал аллинче.
Чĕрӳ тытамаклăн кăрт-карт! халь тăвать.
Такам, тен, ăна та усал пек пăвать?

Манра темле чир. Кĕрет вăл чĕрре.
Нимле те çĕнсе илейместĕп пĕрре!
«Касу, – тет, пĕри. «Грипп», – тет, тепри.
Хăйне хăй пĕлет-ши чăвашăн чĕри?

* * *

Чул айĕнче ман чун выртатчĕ.
Йĕри-тавра тусанлă çул...
Тати-сыпписĕр çын утатчĕ.
Таптантăм пулĕ темĕн чул?

Шăпа, тен, палăртрĕ вăйне?
Эс такăнтăн çав чул çине.
Чул айĕнчи чуна кăлартăн,
Пĕлмесĕр хӳтлĕхсĕр хăвартăн.

Хăрах уран аран тăран!
Ыратнине кăшт пытаран...
Кама кӳрентĕн эс пулать?
Эсир иртетĕр... чул юлать.

Сана эп курăнман пачах.
Сан умăнта эп чул анчах.

* * *

Мĕн-ма мана малтан пĕтерчĕç,
Мĕн-ма салатрĕç асăма?
Халь, тем тесен те, пурнăç терчĕ
Хытса çеç юлчĕ чунăмра.

Эп сыхланас тесе шутларăм.
Эп тăхăнтăм кĕççе тумтир.
Çынран кулма пăртак пуçларăм...
Çук, çемçелмест ăшри сив чир!

Халь кам пулса çынна тухас-ши?
Манса эп кайнă хам çинчен.
Кам ман чунра илем курать-ши?
Пĕр сăн палли юлман çĕртен.

«Çĕклен!» – тесе, кĕрлет пĕр сасă.
Чул пек чунна çапса эс ват!
Нихçанхинчен çунать таса
Çĕрте таптаннă чĕрĕ ванчăк!

* * *

Пĕр утрав.
Вĕççĕр тинĕс хура.
Ак, каллех вăл пуçлать тапăнма.
Ишĕлет шыв айне чĕр тăпра...
Чул хысакĕ пул хирĕç тăма!

Чул пӳ-силлĕ кунта йывăççем.
Чул тымарлă тин тухнă чечек.
Ачашла сивĕ çил, тивĕççем!
Тинĕсре пĕр утрав тăр пĕччен.

Тăр пĕччен.
Пĕр утрав.
Халиччен никама парăнман!
Чашкăрать чакнăçем шур пăтрав:
«Пурпĕрех çук пулан!»

* * *

Ют сăмахсем кĕреççĕ чĕлхене.

Таçтан пĕлеççĕ-тĕр чĕре тĕлне.
Чăваш чĕлхи асамлă çил арман!
Мĕне кăна вăл авăртман?

Çĕн сăмахсем, ак, савăнмалăх.
Пухаççĕ хакăла пуçа таймалăх.
Чăваш чĕлхи – мăн никĕслĕ сунтал!
Çапмассерен тупать хавал.

Кив сăмахсем выртаççĕ чун-варта.
Вăхăт сарса унта пĕр таната.
Чăваш чĕлхи – мĕн ĕмĕрхи вăрман!
Çĕн ĕç тума парать хăват!

* * *

Чăваш пĕтес тесе шутларĕ...
Çухатрĕ савăк чĕлхине,
Юррисене тек юрламарĕ,
Пăрахрĕ çăмăл ташшине.

Ачисене вăл вĕрентмест
Чăвашăн ырă сăмахне.
Çĕнĕ куна кĕрсн пĕлмест
Çултан-çул тарăн йăлине.

Чăвашăн харсăр чĕрине
Мĕнле-ши тĕлĕк халь карать?
Чăваш çухатрĕ чĕлхине.
Мĕнпе ăна улăштарать?

* * *

Тупра хуплать чуна, çиет куçа,
Пĕр вĕçĕмсĕр ыйтать укçа.
Ларать ăшра тымар ярса

Чуна иленнĕ çĕн хуçа.

Тупра чутлать чура, тухать турра,
Пуç çаптарса илет ăса.
Выртать килте купаланса
Чуна çаратнă мул-тупра.

Тупра, тен, вупăр? Авалтан
Çынна пусать чулпа пĕр тан.

* * *

Пĕрне-пĕри пулăшнине,
Пĕрле пулма тăрăшнине,
Тапса тăран чун ташшине –
Кĕтрет çути вăл – тейĕттĕм.

Кĕтрет çути те тейĕттĕм
Чунтан-вартан калаçнине,
Малашлăха талпăннине,
Ĕç патнелле ал пынине,
Илемлĕхе иленнине...

Кĕтрет çути вăл – тейĕттĕм!

* * *

Чун тĕпĕнче асамлă çутă.
Пур алăра пĕр вăрттăн вăй.
Епле тапса тăрать вăл хытă,
Кунран кунах илет пек йăлл!

Аттесемпех эпир пуçланă
Типтерлĕ чăнлă пурнăçа.
Тахçан ăсра картса хăварнă –
Чăваш çути чунра хуçа!

Хăй аллипех янравлă шăпăр
Çын ăсталать пуш вăхăтра.
Кун-çул килет хăш чух пит йывăр.
Вăл палăрать шух ташăра!

Чăваш çути тaçта ӳкмелĕх
Халь çуралать пек халăхра.
Тăвансене кĕтсе илмелĕх
Тату сăмах пур кăмăлра.

Чăваш çути тесе хаклатпăр
Чун ăшшине эпир паян.
Пĕрле ларса, ак, юмахлатпăр –
Халь тин пулатпăр, тен, пуян?

* * *

Чăваш çути – чунри сăваплă туйăм.
Ăна тупсан анчах эс Турă пулăн!
Тапса тăрать ăшран пек чун ăшши –
Çынра-мĕн упранать хĕвел ташши!

Чăваш çути – тĕнчен кăвак хуппи, тен?
Пурнăç хытти куççуль тăкать-и, тен?
Ун чух эс пуçтарма çеç ан ӳркен:
Инкекĕ те, синкекĕ те телей иккен!

Вылять пек куç кĕски çын аллинче.
Епле аван тăма хĕвел çинче!
Чăваш çути куçран-куçа çӳрет,
Хĕвел çути пекех куçа кĕрет.

Илемлĕхе илме пур пултарулăх,
Алра ăсталăх. Çăлтăра та çулăх!
Чăваш çути – мĕн ĕмĕрхи юмах –
Пĕрле ларса халь тапратар сăмах...

* * *

Кĕреш тиетпĕр пĕр çын пек.
Кашни – кĕреш пекех тĕрек!

Тăваттăн эпĕр, пĕр касран,
Ялти илемлĕ Йăлăмран.

Тĕлĕнмелле, çав ват пускил
Вилес чухне çаврать çурт-кил.

Кĕреш тиевĕ ал хытти.
Пĕри ытла та пысăкки.

Çавна çĕнсен, кулать Гришша,
Карчăк тухать пек çĕн çынна.

Мекĕрленет вăрман пĕрле.
Туртать тӳпе те кĕреше.

Ан чак пĕр утăм. Тăр пĕр пек!
Кусса кайсан тĕнче пĕтет!

Пĕр харăссăн тапса тĕртсе
Качча паратпăр ват хĕре!

* * *

Юр хĕвсе лартнă февраль
Темскер ĕнтĕ халь кăтартать?
Çанталăк пит сивĕ тăрать,
Çĕр пичĕ те чул пек хытать.
Çапах та юр çунă чухне
Пачах урăхла курăнать.
Юр çунă чухне пĕр ача

Юртан йăвалать Юрача.
Юр уншăн сивех те мар.
Ăна вăл ун-кун уналать.
Вăл хăй те темле Хĕл Мучи.
Вăл Турă пек, ак, айванла
Туса тултарать те ача...
Чăлпар саланаççĕ вара
Юртан ăсталанă чунсем...
Ытла та пит сивĕ тăрать –
Халь кам тет ача йăвалать?
Юр хĕвсе лартнă февраль
Пачах урăхла пурăнать.
Çилпе халĕ вăл килет те
Хĕле тепĕр май çавăрать.
Хĕл сивĕ тăрсан çулла, тет,
Çулла вара ăшă пулать.
Тен, паянтан сив февраль
Çавăншăн çеç тăрăшать?

* * *

Сивĕтсе пăрахрĕ, ӳкрĕм чирлесе...
Сивĕпе пĕрле, тет, чир çӳрет йерсе.
Сыхланма пĕлмерĕм, курăнать, аран
Сывлăш та тухать ман карланкăран...
Акă халь ларатăп, ӳсĕркелесе...
Кăшт ларсан вăй илĕп, эс çавна пĕлсем!
Ак, ĕçе те çитрĕм, тытрăм ручкине,
Виç йĕрке пуль çыртăм шурă хут çине.
Çавăнтах лăплантăм – турăм эп те ĕç!
Халĕ, сипленмешкĕн, эрехне те ĕç...
Эй, çапла пулмасăр! Сивĕре анчах
Эпĕр пурăнатпăр кăшт урăхларах.
Тен, чир-чĕр те кирлĕ? Пурăнăç вара
Сывалсан, туятăн, кирлĕрех тата.
Сивĕтсе пăрахрĕ, ӳкрĕм чирлесе.

Чирлесе ларатăп – телее кĕтсе...

* * *

Санпа тĕл пулманни çĕр çул та пулĕ иртрĕ
Шăммăм-шаккăм та ĕнтĕ çĕрсе пĕтрĕ пуль
Сывлăшăм таçта çĕр тавра çаврăнса çĕтрĕ,
Ятăм та сан асунтан тухса ӳкрĕ...
Çапах та, акă, каллех ним пулман пек тăратăп,
Каллех сан çине хĕрхенсе çеç пăхатăп...
Эп мар-мĕн, эс ху йăлт пĕтнĕ!..
Эсĕ вĕт мана манса кайса çапла çĕртнĕ.
Акă халĕ эпĕ ӳт-пĕвĕме тӳрлетрĕм,
Юн таппине те, епле вăл вăйлă, çĕнĕрен хускатрăм.
Сывлăшăм вĕрин тапса тухрĕ, ăш-чикĕм
Тек ĕнтĕ ыратса аптратмасть тек.
Ятăм тăсса хам юратнă юрра тепре.
Тепĕр çĕр çул ним те мар пурăнатăп-ха...
Сан çума та тепре пырса ларăп-ха...
Ун чух вара мĕн калăн? Тепĕр чух
Çумра ларнипех вĕт пулатăн чух.
Эх, питĕ лайăх пулчĕ сан çумра ларма!
Майĕпен-майĕпен те пĕтсе пынăçем
Çулсем, чăн та, çĕр çул та иртрĕç пуль?

* * *

Хама шыратăп пĕрмаях,
Пĕрмай хама шырап...
Хама тупсан, ак, самаях
Эп çын пекех пулап.
Паян та, акă, тарăхап –
Эп нимĕн те туман!
Эс тĕплĕнрех пăхса тухсам
Ăнман ĕçе татах!

Вара хӑвна, тен, ӑнланан –
Санра ҫав – япӑххи!
Вара каллех тупа тӑван –
Шыратӑн лайӑххи!
Ҫапла кунран-кун майӗпен
Эс улшӑнсах пыран...
Эс лайӑхрах пулса пырсан,
Тӗнче – лайӑхланать!
Акӑ мӗнле иккен ку ҫул –
Хӑвна шыранӑ ҫул.
Эс хӑвна майлӑ урӑх пул,
Хӑвна тапта та – ҫӑл!

* * *

Ӗнер ман мӑнук ҫуралчӗ.
Тӗнче ача евӗр ҫуталчӗ.
Халь ӗнтӗ ман та ун евӗр
Ҫын пек ҫураласчӗ-ха тепӗр...
Ун пек ман пуласчӗ таса.
Ҫитет пуль ҫул тӑрӑх кусса!
Ҫук, урӑхла май килмест,
Эп урӑхла ҫул пӗлмес!

* * *

Хӗвел тухнине курса юлтӑм.
Хӗвел пек пӗр авӑк пултӑм.
Кӑмӑллӑн утрӑм ҫул тӑрӑх,
Пулчӗ мана кӑштах шӑрӑх...
Пальто тӳмине салтса ятӑм –
Ку ҫуркунне пуль, шутларӑм.

* * *

Турӑ тунӑ, тет, сана, хӗрарӑм,
Адам ятлӑ ҫын аякӗнчен.
Арҫынпа пӗрле пулма хушса хӑварнӑ

Çакă тĕнчерен мĕн кайиччен...
Çавăнпа та эсĕ çав арçынсăр
Утăм та тăваймăн урăх тек.
Унсăр эс тăрса юлатăн сумсăр,
Унсăр чечекленмĕн чечек пек...
Акă вăл, çав Турă пек, асамлăн
Сан çине ачашшăн çеç пăхать.
Эсĕ çавă Ева пек пулатăн,
Савăнса туту сан йăлл! кулать.
Акă, ху та, тен, сисмерĕн пулĕ,
Кĕрсе ӳкрĕн унăн ытамне...
Пулса тăтăн кăвакарчăн чунлă,
Илтĕн пулĕ кайăк çунатне...
Халĕ ĕнтĕ ху та Турă майлăн
Унпала пăхса тăран пĕр тан.
Вăл çеç мар-ха! Ху та хурмăлатăн
Арçынна, çав Турă пек, тăмран.
Халĕ ĕнтĕ иксĕр те пĕр чун пек
Иксĕр те унатăр... пĕр ача.
Çак тĕнче, апла, арçынсăр çуккă.
Çуккă вăл хĕрарăмсăр пачах!

* * *

Хĕвел тухиччен пуçлать те
Хĕвел кайиччен тимлет.
Иртсе пынă чух илемлĕн
Тин-тин! те тин-тин! текелет –
Темскер калама вĕт пĕлет!
Ăна эс илтен те хаваслăн
Ху та тин-тин! текелен.
Пурнăç вара телейлĕн
Килнĕ пекех туйăнать.
Анчах та ку вăл пĕр авăк –
Хĕвел кайсанах пĕтет!

* * *

Миçе хутчен сăмах эп панă:
«Урăх ĕçместĕп никампа та!»
Вăхăт иртсен хама та маннăн
Алла тытатăн та курка
Каллех калатăн: «Тек ĕçместĕп!».
Хăвна туятăн паттăр пек.
Эп, чăн та, авăнсах ĕçлетĕп
Ĕç пур чухне кун çутипе.
Каçпа вара, кăшт ĕшĕнсессĕн,
Каллех килет те пĕр шуйттан...
Ун сассине чунпа илтсессĕн,
Каллех пĕрер курка тытан...
Миçе хутчен ĕнтĕ, мантарăн,
Çапла эп панă «чăн сăмах»...
Паянтанпа вара ăнлантăм:
Сăмах пама пулать, паллах,
Анчах ăна тытма пĕлмелĕх
Хăватăм ман чунра çукрах.
Тен, çавăнпа та тек кĕтмелĕх
Нихçан та памăп эп сăмах.
Ун вырăнне тытса ĕçлетĕп
Сăмахсăрах пĕр-икĕ ĕç.
Ĕçне тусан, вара çӳретĕп
Пĕр савăнса-пăшăрханса...
Ĕçне татах вĕт тумалла!

* * *

Ак, ĕнтĕ çурхи ăшă çил те
Хускатрĕ çемçе турата.
Эпĕ тахçан çиленнийĕ
Иртсе те каять пулмалла.
Каллех тепĕр хут эп пăхатăп
Вăраннă ача пек ачаш.
Тĕнче ман пĕрре те хытман-мĕн,

Халь уншăн та савăнап.
Халь ĕнтĕ эп хурăн пек ăшшăн
Çу тăршшипех ларап.

* * *

Ун чух кĕркуннеччĕ... Шап-шур
Ларатчĕç кунта чечексем.
Халь ĕнтĕ куçа хупса кур
Вĕсем тайăлса пăхнине...
Ун чух питĕ лайăхчĕ çав.
Телейлĕччĕ эп тилĕ пек.
Тăратчĕ тавра çап-çут
Ӳт тĕслĕ сап-сар кĕркунне.
Эп тутă пулас та, нимех те
Мана кирлĕ марччĕ ун чух.

* * *

Ирпе çил-тăвăл вăйланчĕ,
Çурт çумĕнчи хурăна тапăнчĕ.
Аврĕ те аврĕ, шавларĕ...
Пĕрех парăнтараймарĕ!
Унтан пӳрте кĕме тăчĕ,
Тĕртрĕ те тĕртрĕ – пăрахрĕ.
Халĕ ĕнтĕ пăх-ха, шăп.
Çил хыççăн çур кунĕ килет!
Урăх вара мĕн кирлĕ?
Тухрăм та утрăм çурхи çулпала,
Вăрттăн калаçрăм çап-çут тумлампа.

* * *

Паян мана питĕ çăмăл:
Çурхи çутă ир пекрех.
Чунра пухăнать ырă кăмăл,
Çынсем те, курап, хитререх!
Ура айĕнчи шурă пăр

Шатăрр! туса ванать.
Çак пурнăçра çапла-тăр
Пуçа та ватма пулать?
Çутă та ăшă çур кунĕ
Сиплĕх кăна пиллет.
Çул тăршшипе шурă юрĕ –
Çисе те пăхассăм килет!
Курак сассине илтеп те
Хытах кăшкăрса ярап.
Курак пек, тен, эпĕ хама та
Тĕнче тăрринче курап.

* * *

Пурнатăп эп çанталăк пек,
Унпа пĕрле эп – ир те каç.
Çурхи çап-çутă куççульпе
Куççем тулаççĕ те пĕр кас,
Йăлтăрр! кăна кулса ярать
Телей туйса тута хĕрри.
Е хăвăрт çеç мулкач пекрех
Йĕр хăварап та юр çине,
Тухса шыратăп çут ирпе
Мулкач хăварнă çав йĕре.

* * *

Хĕвел тухасса та кĕтетĕп.
Ун чух, тен, сас парĕ пĕр кайăк
Хĕвел тухасса çеç кĕтетĕп...
Хĕвел, ак, çап-çутă хуралçă
Тӳпе тăрринех хăпарчĕ.
Ак, чăн та, таçтан пĕр кайăк
Юрри пуррине пĕлтерчĕ.
Тин-тин! те тин-тин! текелет,
Хĕвел юррине вăл пĕлет.
Хĕвел те пит ăшшăн килет,

Юр çунă тёлте ялтăрать,
Паян ытларах кăмăллать
Юр кайнă хура вырăна...
Унта пухăнать те вара
Юр шывĕ ĕçмелĕх кăна.

* * *

Эп хама аякран курман –
Питĕ ывăннă çын майлă
Шыв çине те пăхса тăман.
Шыв юххи вăл хăй те хайлавлă.
Итлесе тăнăçем сăмахла...
Пăхса тăтăм та тем каларăм:
Шăнкăр-шăнкăр! терĕ пĕр сас –
Манпала темĕн пулчĕ пулас?

* * *

Çанталăк хăйне кăтартать:
Халь ĕнтĕ тата мĕн тăвать?
Халь ĕнтĕ ун майлă пулас пек
Эпĕ те шăхăркалап...
Хăй вырăнне халь тупас пек
Кив çулçă ун-кун чупкалать.
Пĕччен те иккен пит лайăх!
Кив çулçă пек мар та, паллах,
Çанталăк пек каламалăх
Тупрăм эп пĕр сăмах!

* * *

Темле питĕ паллă сас
Çӳлтен илтĕнет пĕр кас.
Пăхатăп та, мĕн, чĕкеç
Пуç çийĕн чуччу пек вĕçет,
Çурхи тӳпепе киленет.
Кăна эп пĕрре те кĕтмен!

Телей пекки пулчĕ те!
Халь ĕнтĕ чĕкеç пек чĕтревлĕ
Çурхи тӳпере çутă пур.
Халь ĕнтĕ ман чун та вĕçевлĕ –
Çӳлтен ӳкнĕ чух курса юл!
Çапла пуль, çулла та çитрĕ,
Апла, мĕн пулни те – иртрĕ!

* * *

Вĕрене çеçкине тăкрĕ,
Шăпчăк та шăп ларчĕ,
Çĕмĕрт шап-шуррăн тăчĕ...
Кунсем иртнĕçем иртрĕç...
Вĕрене çеçкине тăкрĕ...
Халь ĕнтĕ симĕс те сарă
Тăмха çапса тухнă çул тăрăх
Эпĕ утса иртрĕм...
Вĕрене çеçкине тăкрĕ.

* * *

Сарăлса çитеймен çулçă
Сарăхнă та ӳкнĕ. Куртăм
Темле, калăн, чулçă
Çула тепĕр хут сарса тухнă.
Темле сарă-симĕс тĕслĕ
Мозаика евĕр пурнăç
Кунта çăвĕпе хуçаланчĕ.

* * *

Кашни кун сана тăрласан,
Шăтать пуç тăрне măйрака.
Вара, тарăхса та кайсан,
Пуçлатăн çынна шăйăрма –
Эс măйракаллă-ха та!

Ан шăттăр тесен, ан итле,
Шăтсан та çапса хуç!
Вара чиперех. Вăрçсан та,
Темле тăрласа тăрсан та
Çынпа чиперех пурăнан –
Çапла пултăр теп паян!

* * *

Çемçе çанталăк çемĕçтерчĕ
Чул евĕр хытнă чунăма.
Çумăр çуни кансĕрлемерĕ
Пылчăк пулсан та çул утма.
Ак, эпĕ сывласа илетĕп
Чĕп-чĕрĕ, нӳрлĕ сывлăша,
Çӳренĕçем илсе килетĕп
Чун туйăмне пĕрле хушса.
Халь ĕнтĕ эпĕ те çемçелнĕ
Çемçе-çемçе ăш çумăр пек.
Сана çак çумăрпа кĕлернĕ –
Кирлĕ пулать çакă тӳпе.
Пĕрле ăна илсе эп килтĕм
Хам хулпуççи çине хурса.
Сана çапла эп илĕм-тилĕм
Шăварăттăм çумăр çуса...
Вара, тен, эсĕ те çемçелĕн
Шыва кĕртен ача пекех.
Алă çупса темле илемлĕн
Кулса та ярăн юххи пек...
Ун чух вара тепре пуçлатпăр
Юратупа та выляма...
Ан тив, çанталăк çумăрлантăр!
Пире вăл кирлĕ çăвăнма...

* * *

Çак хутлăхран эп тек тухаймăп.

Çак хутлăх – çăмăрчăк кăна.
Унтах хама эпĕ çухатнă,
Е тупнă пулĕ тепĕр хут?
Çу çумăр, çу татах та хытă.
Мĕн пур таса мара юхтар!
Çуса тасатнă хыççăн ыррăн
Пăхса çӳретĕп юххи май.
Епле халь çутă та таса,
Епле ку тăрăх çутă саслă.
Халь ĕнтĕ епĕ те çарран
Чупса çӳретĕп ача евĕр.
Çат-çаттăн илтĕнет чупни,
Сасси чуна та уналать.
Мĕн-ма ача шыв чăххи пек
Шыв таврашне пит юрататать?
Çав хутлăхран эп тухаймарăм –
Чупатăп çумăр айĕнче...

* * *

Аптрамалла, халь тем тумалла тет?
Чунра, чăн малтан, сăмах тупмалла.
Сăмахĕ те пулнă, те пулман – паллă мар.
Унсăр, çапах та, тĕнче çуралман пуль?
Акă, эпĕ те тупрăм чунра, çыртăм сăмах.
Пулса кайрĕ чунра темĕнле çут çăтмах...
Тепĕр çыртăм та куртăм, тĕнче урăхла!
Тĕнче пĕтĕмпех-мĕн çырнă пек чăвашла...
Кĕтĕм унта, пăхрăм та – пурте тăван!
Никам та унта аптраса халь ларман.
Каланă та, çырнă та пуль пин сăмах –
Мĕн каланă, кунта йăлтах халĕ пур.

* * *

Чĕвĕл чĕкеçĕн
Килтĕн вĕçсе.

Чӗрсе те илтӗн
Шыв питне.
Эп тытса пăхрăм
Хамăнне...
Чӗвӗл чӗкеҫӗн
Кайрăн вӗҫсе.
Эп пăхса юлтăм
Шыв куҫӗпе.

* * *

Тухрăм та эпӗ, куратăп, тӗнче –
Ăстаҫă сăрланă пек ҫут кӗленче.
Ун витӗр пăхан та, куран темӗн те –
Пӗлмен япала та тухать куҫ умне.
Ак, эпӗ сисетӗп, ҫӗр айӗнчен
Шур кăрăç тухать ҫуталса пит чечен.
Ăна та тататăн, тăватăн тута
Кая юлса ҫитнӗ хăмла ҫырлине.
Ак, килчӗ пӗр кайăк – мана пӗр юлташ.
Вăл темӗн каларӗ. Эп ăнланмас.
Унтан килчӗ шăплăх. Ларап тăнласа.
Тӗнче-мӗн, чăнах та, таса япала!
Ларсассăн, туяп, мана та аван...
Аван, кайăк евӗр, темскер калама.
Аван пуль, чăнах та, шур кăрăç пулма –
Ҫырла пек хӗп-хӗрлӗн пулсан та юрать!
Ăна та пырать те пӗр хӗр, ак, татать...

* * *

Сана тута тусан тӗнче те
Туталлă пулчӗ пулмалла?
Тута тăвать кил тӗлӗнчи
Хӗм сапакан хӗрлӗ улма та!
Йăмра та питӗ măн туталлă...
Ҫулҫи вара, ҫулҫи, чăнах та,

Çӳхен-çӳхен çеç чуп тăвать...
Апла, ман чун туталанать!
Тут кĕнĕ тĕнчере çапла
Пуçлатăп пулĕ юрлама?
Тута тăсатăп кăмăлтан...
Кам чуп тăвать ăна кайран?

* * *

Çĕр çине ирпе шур тăм ӳксен те,
Утса пынă чух пӳрне кӳтсен те,
Эп туятăп, пур-ха, пур çулла.
Çав çутса пырать пуль ман çула?

Кирек мĕн килсе тухсан та пурнăçра,
Хуралса килсен те куçăм. Таврара
Эп куратăп, Тур шуратнă пуль, сана?
Кĕркунне, эс ман патра хăна кăна!

Кĕркунне пĕрех килсе çитсен те,
Куççульпе турачĕ йĕпенсен те,
Асăрхатăп, шурă хурăн пек
Куçусем сан симĕс çулçă пек.

* * *

Эп пыратăп утса...
Ерипен эп пыратăп.
Чĕре евĕр çулçа
Таптама та хăратăп.
Çыншăн, тен, ним те мар –
Ак, таптарĕ те кайрĕ.
Сарă çулçă вара
Çĕрпе тулчĕ те ларчĕ.
Эп ăна çил çине
Çĕклесе те пăхатăп.
Ах, амантнă, тесе

Пуçтарса та хуратăп.
Вăл çӳретĕр пĕрле,
Ман амантнă чĕре!
Тен, мана та кĕрет
Çулçă сăнĕ?

* * *

Эс килетĕн пек вăрттăн
Картишне сăн кĕртме.
Хĕвел пек питĕ çуттăн
Курăнан ир çинче.
Халĕ тин ĕнтĕ урăх
Çын çӳпленĕ тĕнче.
Эсĕ Турă пек турăн –
Эс тасатрăн пире!

* * *

Эпир пуçтаратпăр çулçă –
Ача евĕр чун пулчĕ.
Кантăк пек карăнать тĕнче.
Çулçă пур çав тĕнче варринче.
Унта эпĕ вырап улпутла.
Çавăнтах эп выляп ачалла.
Сарă çулçă вĕçет,.. Сарă çулçă!
Эс ăна пуçтарсан пулăн муллă!
Калăн, ку, тур ӳстернĕ укçа.
Мĕн ӳкни – эс пулатăн хуçа!
Эпир пуçтаратпăр çулçă –
Кĕсье халĕ тин тулчĕ!
Эй, çулçă вара, çулçă
Пуçа телей евĕр çурĕ!

* * *

Мĕн чухлĕ сăвă çакă тĕнчере!
Мĕн чул поэт! Анчах та чĕрере
Пĕрех темскер çитмен пек туйăнать.
Чĕре каллех сăвă ыйтать...
Пĕр сăвăра тĕвĕленет чăн пурнăç.
Суя теме те çаврăнмасть чĕлхе.
Суя пулсан та – сăвăри пек пултăр!
Ман пурнăç. Ăна вуланăçем, тепĕр чухне
Куççуль тумламĕнче ялтратăр çак тĕнче.
Аса илсен темскер, пулатăн ху та сăвă,
Кĕрсе каятăн урăх хутлăха...
Унта тупатăн хăтлă çĕршыва!
Çапла. Каллех ыйтать чĕре сăвă çырма.
Çырмасăр та май çук. Тĕнче ытла та хытă.
Пĕрмай ыйтать укçа, çĕклет патак...
Ун вырăнне çырас килет пăртак!
Ман кун çапла çын хыççăн çӳремест.
Çил евĕр юрлама та вăл пĕлмест.
Ун хăйĕн пур юрри. Çав юрă  сăвăра.
Тен, сăмахра та мар вăл? Кам пĕлет, ара?
Тен, сăмахсен хушши, нимскер çырман
çĕрте
Ман шухăш ялтăрать пĕр сассăр çиçĕмле?
Çав ним çук çĕрте чăваш тĕнчи выртать.
Çуралтăр çав тĕнче çак самантра...

* * *

Кĕмĕл çĕрĕ халь сан аллунта.
Çутă çăлтăр пек вăл ялтăрать.
Мĕн куран-ши ун витĕр пăхсан,
Мĕн сана йыхăрать, пăлхатать?..
Тен, эс куртăн тахçан, ĕлĕк чух
Чупса тухрăмăр, пăхрăмăр шух,
Сĕрсе хунă пуль терĕмĕр çу
Кун-çул тăршшĕ утас çула?..

Ак, тепре, тен, пăхатăн татах?
Тен, унта аякра пур-тăр пирĕн кĕтес?
Эпĕр лартнă пĕр чаплă кермен.
Çавăнта пуль тупатпăр телей
Çук, унта та телей пÿрмен,
Телей çулĕпе çÿремен...
Тепĕр пăхрăм та куртăм çул.
Темле хурлăхлă сас çÿлтен
Çăлтăрсем сапса хунă тĕлтен
Чĕрене йĕртмелле илтĕнет...
Çăлтăр çулĕ иккен, çăлтăр çулĕ!
Çав çулпа пурăнма эпĕр килнĕ.
Çав çулпа ĕнтĕ кайăпăр тепĕр.
Лайăх кайăр вара, тейĕр...

* * *

И. Степанова

Эпир те йывăç пек, Иван,
Тымарланатпăр майĕпен.
Тĕнче умне пырса тухсан,
Курнатпăр çулçă пек.

Ак, кĕрхи çил вĕçсе килет!
Ак, çулçă çил çинче!
Вĕçсе килет, çÿле çĕклет,
Ак, ÿкерет пире çĕре!

Эпир те йывăç пек, Иван,
Ÿсетпĕр майĕпен.
Курнатпăр тепĕр чух айван –
Кĕтет пире тÿпе!

* * *

Ма çырма пăрахрăн, тусăм,
Сăмахран пуль вĕт хăвна эс тунă?

Сăвă çырнă чух кăна каллех çуралăн...
Пěртен пěр сăмах – чěре хуралě –
Вăл пěтме памасть сана, тěнче!
Çырнă хут вăл, калăн, кěленче.
Çав хут витěр курăнать тěнче.
Тем те пěр курса эс тěлěнсем те,
Лăпланса вара ларсам пăртак.
Ма çырма пăрахрăн эс татах?
Çырнăçем пулатăн вěт эс ху та чаплă,
Хут çине ÿкернě чуншăн та яваплă.
Ак, каларăн пěр сăмах «чěкеç».
Вěçсе кайăн ху та ак кěçех!
Чěкеç мěн-ха, вăл нимех те мар.
Каласа пăхсам эс «эп сывмар».
Çавăнтах кайса ÿкетěн – пыр та кур!
Ак, епле вăл кăтартать хěн-хур.
Çавăнпа та эп çырмастăп урăх. Çук!
Эп çырсассăн тем пěтессěм пур!
Пěр сăмахсăр савăнса ларап,
Санпала, тěнче, сăмахсăр калаçап.

* * *

Тавах сана, пěчěк катаçăм,
Эс хăтлă та вăйлă асамçăн
Сиплетěн ман пěтнě чуна,
Сыхлатăн çак иртнě куна...
Иртсе, ак, пыратăп каллех эп
Ката çумěпе ача пек...
Пěр çулçă, куратăп, талчě.
Мěнех вара, вăл та çуталчě!
Мěн-ма эс ăна тытмарăн?
Ката пек хăватлă пулаттăн...

* * *

Лăпкăн кăна пырса çапрě

Ман питӗмрен ӑшӑ çил.
Тӳпе тепӗр хут çутарчӗ
Çурхи тахçан кӗтнӗ пил.
Халь ӗнтӗ асамлӑ çеçке пек
Куратӑп усал тӗсне,
Кӑштах уйӑратӑп ырра та,
Ырри çумӗнчи çынна...
Халь эпӗ чечек пек сывӑ
Çыратӑп çак çӗнӗ сӑвва.
Пӗр вӑхӑт эп пултӑм чечек пек,
Унтан эп пӗтеп пӗтӗмпех!

* * *

Пулнӑ пуль, тем те пулнӑ тахçан,
Чупнӑ пуль уй-хир тӑрӑх çарран.
Выртса йӗнӗ пуль йывӑр чух –
Пурпӗрех эпир пулнӑ шух!
Иртсе кайрӗ те, вӑхӑт вара
Тепӗр хут курӑнмасть пек кӑра...
Мӗн тума ас туса эс тӑран?
Иртни пултӑр вӑл чӑн ылтӑнран.
Манӑçни вӗт, калаççӗ, телей.
Мӗн манни чуп туса килет,
Çавӑнпа та пире илӗртет!

* * *

Шутлама пӗлмерӗм ним те.
Шутлама та кирлӗ мар.
Хӑш чухне сим-сим! теен те
Мул тухать, тет, сӑмах май.
Эс вара ӑна ытарлӑн
Хӑвна майлӑ ытамла...
Курӑнать пек мул чӑпаррӑн,
Тытса пӑхнӑ чух алра...
Мӗн-ха ӗнтӗ вӗт вӑл хӑй те

Шутламан алла лекме...
Пиншер çул шап-шур чул айĕ
Пулнă вырăнĕ кĕтме...
Халĕ ак, сим-сим! çеç терĕм,
Тухрĕ выртрĕ ман ума.
Эс ăна, апла, çĕнтертĕн,
Е çĕнтерчĕ вăл сана?
Куç илмесĕр, ак, сăнатăп:
Пур ун çепĕç аллисем,
Пур ун куçĕ, пур сăнарĕ
Хăйне май ӳкернисем...
Тен, вăл выртнă курăнсах пуль,
Çын тĕлне пулман кăна.
Тĕл пулсан та, тен, курман пуль,
Иртсе кайнă куç хупса?..
Эп вара ухмах пек пултăм,
Куртăм пулĕ чăннине
Пуç тайса сим-сим! эп турăм –
Турă пачĕ чăн мулне!

* * *

Юр çăвать. Ку ним те мар.
Урăх ним те кирлĕ мар.
Хула тăрăх эп çӳрерĕм,
Ывăнма та пуль пĕлмерĕм...
Майĕпен хула вăранчĕ,
Чакаксем вĕçме пуçларĕç.
Юр çăвать. Ку ним те мар.
Урăх ним те кирлĕ мар.
Юр çине пăхса тăратпăр,
Тем ăнланнă пек пулатпăр.
Алăпа тытса пăхатпăр,
Сивĕ те, пĕрех савнатпăр.
Юр çăвать. Ку ним те мар.

Урăх ним те кирлĕ мар.
Пĕлĕте пăхса тăратпăр,
Сив пите юрпа çăватпăр.
Юр пĕрчи пире хуплать,
Пит-куçа та кăтăклать.
Юр çăвать. Ку ним те мар.
Урăх ним те кирлĕ мар.

* * *

Хĕл ларнă тесеччĕ эпĕ.
Хĕлле пурăнма аванччĕ...
Хура кĕркунне вара,
Ытла та хура.
Ывăнтарчĕ пулас тата,
Хĕл килтĕр тесех кĕл турăм.
Хĕл ларчĕ пĕр куна.
Унтан юхса кайрĕ таçта.
Юр юхса кайрĕ. Шутла-ха, эсĕ.
Мĕн-ма вăл пĕрмай çапла?
Кирли нихăçан та çук.
Мĕн кирлĕ мар – пур!
Каллех пылчăка вара,
Вăрçса çăрса пыр.
Хĕл ларчĕ тесеччĕ эпĕ.
Шап-шур тĕнчере аванччĕ...

* * *

Паян эп чупса пек килтĕм
Тур хушнă ĕçе тума.
Хампа пĕрле вăрттăн илтĕм
Вилми Çеçпĕле вулама.
Ак ĕнтĕ пăхса ларатăп:
Ун сăнĕ, ун амăш, савни...
Халь эп те çапла юрататăп,
Çыратăп, вулатăп... Сăвви

Чуна вырнаçса кĕрсе ларчĕ,
Янрарĕ пуçра ир те каç.
Мĕн-ма Çеçпĕл пек пулмарăм?
Ман пурнăç, шутлатăп, çавах!
Вĕт эп те çунса çеç тăраттăм,
Çыраттăм темле пĕр юмах...
Анчах эп вилме хăраттăм,
Тараттăм çынран май килсен...
А, эсĕ вара пуçхĕрлĕн
Сикрĕн çӳлтен куç хупса.
Унтан халь никам та хăй тĕллĕн
Тухман, тет, калле çаврăнса...
Тен, эп çавăнпа пĕтмерĕм.
Шутларăм, эп Çеçпĕл мар.
Хам майлă кăштах шӳтлерĕм,
Пуçларăм чечек пек пулма...
Вĕт ман та çав Çеçпĕл майлă,
Е ун вырăнне те, тен,
Çак тĕнчене тумалăх
Тупасчĕ-ха, тетĕп, хал...
Туса пĕтермен ĕçсем те
Ун юлнă пулас тĕнчере.
Халь, акă, темскер тусан та
Туса пĕтерме май çук.
Эс çавăнпа та, Çеçпĕл,
Эп виличчен ан хăра.
Эс те малтан пĕччен çеçчĕ,
Халĕ вара – халăхра.

* * *

Пĕрре çех пĕр ĕçе тумарăм,
Йывăр пулчĕ кайран хамах.
Пĕр-иккĕ кăштах вăрçкаларăм,
Ĕçĕ юлчĕ вара татах...
Ĕçĕм ман пухăнса та пычĕ –

Ёлкёрсе те пыма май çук.
Ал-ура та йăлтах ыванчĕ
Хăйне майлă «ĕçленĕ» чух.
Ĕнтĕ эпĕ çине тек тăмастăп,
Кирлĕ мар мана ним те халь.
Ирпеле пахчана тухмастăп,
Вăхăта ирттеретĕп ахаль.
Ĕç вара пухăнсах пычĕ...
Арман чулĕ пек мăйран
Кунран-кун çакăнса тăчĕ.
Мĕнле чăтăп ĕнтĕ кайран!?
Йăтса пынă чухне сывлăш пĕтрĕ,
Питĕ тăвăр-çке пулчĕ чуна.
Чăтаймарăм, илсе те петĕм,
Илсе петĕм чул евĕр çăка!
Лăштăрах ăш-чикре пулса кайрĕ,
Пĕчĕк ĕç тытса турăм эп!

* * *

Сăвă савни пек тутлă!
Лартăм унпа мĕн ирччен.
Сăн-пичĕ шап-шурă хутăн
Хуралчĕ кăштах, çырнăçем...
Хама эп темскер каласшăн
Çыртăм пулас пĕрмай.
Чунра такама курасшăн
Шырарăм пулас нумай.
Анчах та тем пек ларсан та
Ним те иккен калаймас.
Хама сăвăра курсан та
Никам та мана паллаймасть.
Пĕрех питĕ тутлă пулчĕ
Сăвă çырса ларма.
Йĕрке çырнăçем тулчĕ
Туйăм ман хĕрнĕ чуна.

Халь ёнтĕ нимрен хăрамастăп,
Пур халĕ ман чун савни!
Ăна эп пĕрех пăрахмастăп –
Вăл та пăрахмĕ тетни?

* * *

Çӳп-çап шăтăкĕнчен
Тапаланса тухатпăр майĕпен.
Эй, иртнĕ ĕмĕрте çакă кунччен
Пире çак кĕтесе шăлса хурса иккен!
Унта эпир выртса, тет, пăнтăхса...
Хăш-пĕр чухне ыраттăр-ха тесе,
Тăвар та, тет, сапса çав çӳп çине.
Ак, эпĕр хамăр та çав çӳп-çапа
Ниçта кайса та кĕрейми пулсан,
Сапатпăр ывăçпа шап-шур тăвар.
Туятпăр, пур пулас юнра та çав тăвар...
Тапаланатпăр çавăнпа та шăтăкран...
Миçе пуль ĕмĕр кĕтнĕ çак куна,
Мĕн чул çӳп-çап пуçтартăмăр хамра.
Халь ним пулман пек тап-таса
Çак тĕнчере тăратпăр йăлл! кулса.
Пире курса, шутланă, çӳп-çапран,
Ку çынсене епле сума сăван...
Курмаççĕ-çке, эпир хура ĕçре...
Хура ĕçре таса тăратпăр-çке!
Улма пекех шап-шур та çавракa.
Çав ылтăн улмана çиме пуçла кăна!
Çук, тем çитмест. Асăрхамасть тĕнче.
Тен, вăл шутлать, епле çӳп-çап!..
Эх, тăвансем, эсир те вĕт тахçан
Тухса кайса çав шăтăкран...
Эпир те сирĕн хыççăн талпăнса...
Тухма тăрсан вара
Тапса хăвартăр çамкаран.

Халь çавăнпа пĕр-ик шăлпа
Тата пĕр катăк тутапа тăратпăр та!
Мĕн каласан та тĕрĕс мар тухать,
Темле пăхсан та çӳплĕ курăнать.

* * *

Эп виличчен, ман алă чăтĕ-ха,
Мĕн кирлине те туса парĕ-ха...
Ак, халĕ те унпа çырса ларатăп,
Е мăнука тытса пăхатăп.
Çӳлрен-çӳле ăна ывăтнăçем,
Ал ĕçлесе ывăннăçем,
Хама туятăп кăшт телейлĕ...
Çав алăрах пуль ман чĕре те,
Çав алăрах ăс-тăн, шăпа...
Пĕрре туса, тет, вăл мана çын евĕр?
Тепре, кăшт, ак, чăтсан, тен, ху та турăлла
Туса хуратăн, ĕçлесен, тепĕр ача...
Ăна вара эс чăнласах çĕкленĕ
Ху аллупа çӳле те. Ĕçлесе туптанă
Çын вăл. Вăл халь санран маттур!
Хăйне хăй тунă çын, тет, турăран та тур!

* * *

«Ăçта каян, чĕкеç, каçа хирĕç
Ик çунату тăрăх шыв юхтарса...».
Çапла сăмахсем ĕнтĕ çитрĕç
Çĕр-каç çӳреме хурланса.
Юрра тепĕр хут аса илтĕм,
Ас илтĕм чĕкеç пек хĕре.
Çавна шыраса пуль эп килнĕ
Çак шавлă, хура çĕре?..
Çемçен, ик çунат хускалнăн
Юрларĕ пĕр вĕççĕр çав каç.

Эп тăтăп малтан хурланнăн,
Кайран пултăм питĕ хавас.
Вĕçрĕм те вĕçрĕм каç витĕр,
Юхрĕ ӳт тăрăх шыв...
Тен. çумăр çапла кӳчĕ витĕм,
Е çапрĕ пуçран шăв-шав?
Эп нимĕн те урăх пĕлмерĕм,
Çухатрăм пулас эп пуçа?
Эп урăх пĕр сас та илтмерĕм
Чĕкеç вĕçсе иртнĕ каçра.

* * *

Эп юлтăм пулать чунсăр,
Эп те турат пек юнсăр...
Мĕн пулса иртрĕ теп,
Каллех тепĕр хут кĕтеп,
Кĕтеп нимĕне пăхмасăр,
Кĕтеп вăхăта тăсмасăр
Эс тепĕр хут тухасса
Вĕл-вĕлтĕр туса ташлама.
Тĕп-тĕпĕр! те тĕпĕр! терĕ
Урайăн хăми ун чух.
Чун тухса ӳкрĕ тейĕн
Эсĕ ташланă чух.
Эп ăна куртăм та илтĕм.
Выртатчĕ вăл, чăн та, пĕччен.
Ăна илсенех эс те килтĕн,
Килтĕн телей пек куçса.
Халь ĕнтĕ эпир икĕ чунлă
Пултăмăр çĕр каçа.

* * *

Кайăкăм ман, хăçан эс
Тартăн тухса аллăмран?
Кĕтрет евĕр пултăн та лартăн

Манăн ума паян.
Эп ĕнтĕ сана тытмалăх
Вăй тупас çук хамра.
Эс те, курап, хурланнăн
Вĕçсе те пăхан ман тавра.
Пĕр-иккĕ пуль алă тăсрăм
Тытас пек пулса, айван.
Кайран пĕтĕмпех ăнлантăм:
Эс ялана каян!
Кайăкăм ман, хăçан эс
Ларăн килсе ман çума?
Ун чух ĕлĕкхи пек чаплăн
Вĕçетпĕр-ха иккĕн пулса...
Çук, пулмĕ ун пек нихăçан та.
Эс вĕçрĕн, курап, аякка.
Чунпа эп санпа пулсан та,
Туятăп хама çукла...
Кайăкăм ман, хăçан эс...

* * *

Шурă вĕт, тет, пĕри.
Сивĕ-çке, тет, тепри.
Шурă та, сивĕ те – пурте
Чуна илĕртеççĕ хĕлле.
Чăн та, никам та хăй тĕллĕн
Калаймĕ кун пек сăмах.
Кун пек калама кирлĕ
Чун аманни кăштах!
Вара пĕтĕмпех сивĕ,
Вара шурăран та шур!
Сана майĕпен сиплĕ
Сĕтел çитти евĕр кун.
Ун варринче тутлăн
Выртĕ хĕвел сарăлса...
Шур илнĕ куç евĕр, паллă,

Курӑнӗ пӗчӗк хула.

* * *

Паян пурпӗрех ҫыратӑп
Шап-шурӑ чечек ҫинчен.
Юра ҫавӑнпа та хыратӑп
Ҫул тасалса тухиччен.
Шр-шр! та шр-шр! илтӗнетчӗ
Юра хырнӑ чух пӗччен.
Шур юр хырнӑҫем килетчӗҫ
Пуҫа йӗркесем хуллен...
Ак, халь те ас илтӗм пулать те
Ӳкертӗм алри ручкӑна.
Манран вулакан, тен, кулать те
Кулсан та пулать вӗт ҫырма!
Кула-кула эп те ҫыртӑм
Хыт ҫул хӗрринчи юр ҫинчен.
Ҫав шурӑ кӗртре те куртӑм
Шап-шур чечеке тӗттӗмччен...

* * *

Сӗм тӗттӗм ҫӗрте, тӳпе тӗпӗнче
Темле, тен, тасалӑх пур?
Ҫӳлтен ӳксе тулнӑ шур юр тӗлӗнче
Хӑвна тӳпери пек кур!
Ҫав тӗттӗм ҫӗрте, тӳпе тӗпӗнче
Таҫтан тупӑнать пуль ҫут та!..
Нимрен хӑрамасӑр вара ҫул ҫинче
Ҫурта пек юра эсӗ ҫут та
Уттар пурнӑҫ тӑрӑх... Питӗ таса
Ҫав шурӑ юр пек эсӗ ху та!

* * *

Шап-шурах ҫеҫкеллӗ турата

Хуçса илтĕмĕр тем тума.
Хуçса илнĕ чухне, тупата,
Шăпăр юлчĕ пулас аллăмра.

Çавă каç çĕнĕ уйăх тухатчĕ,
Çĕнелме те пуçлатчĕ тĕнче.
Пуç çине шурă юр тăкăнатчĕ
Турата çĕнетесшĕн пулса.

Иккĕнтен сывласассăн харăс
Пас ÿкет пек турат çине.
Ун çине те пăхсассăн, калăн,
Тепĕр хут чĕрĕлет-ха тĕнче!

Чăн та, вăхăт нумай та иртмерĕ.
Хуçса илнĕ турат чиперех!
Паçăрхи пек илем кÿреймерĕ,
Чуна илчĕ вара – пĕтĕмпех!

* * *

Питĕ сивĕ, сивĕ, терĕм
Шур пите пытарнăçем.
Пурпĕрех йăтса çитертĕм
Кăмăла, хытарнăçем.
Питĕ сивĕ, сивĕ пулчĕ,
Çухатма пулатчĕ çав!
Кăмăлсем те вара тулчĕç
Калаçса та пынăçем.

* * *

Хĕвел курманни чылай та,
Хĕвел курса лартăм паян.
Эп хам та хĕвел пек малай та,
Хама туйса лартăм аван.
Унтан эп ăна чĕнтĕм

Çак тĕксĕм те пĕчĕк пӳрте.
Унпа халĕ иксĕмĕр ĕнтĕ
Ларатпăр пĕрле килте.
Эп ыйтрăм унран хаваслăн,
Мĕнле пурăнан-ха тесе.
Ак, вăл та телей тупаслăн,
Çӳрет-мĕн чунпа хӳхлесе.
Ăна та хуппланă пулнă
Хура пĕлĕтсем килсе.
Кăштах тухсанах вăл курнă
Ача хурланса ларнине.
Ăна та иккен йывăр килнĕ
Çак сивĕ раштав каçсенче.
Ирпе майĕпен вăй илнĕ
Шевле пек шур юр çутинче.
Ак, халĕ вăл хĕрлĕ сăнлă
Чăн турă пекех курăнать.
Мана тăван пек килсе пăхрĕ.
Халь ĕнтĕ хĕвел пек пурнап.
Унтан майĕпен вăл кайрĕ.
Ал султăм, чипер кай тесе.
Кĕтетĕм халь тин тепĕр халлăн
Хĕвел хăнана килессе.

* * *

Эс тaçтан аякран килнĕ пулĕ?
Пит çинче санăн пур пичет.
Темĕнле авалхи вăрттăн пулăм
Ун çинче халь çиççе илет.
Тем калаçрăмăр, ас тумастăп.
Ас тума та, кирлех те мар.
Куçа-куçăн ларса та курмастăп
Хам шыранă пĕртен-пĕр çынна.
Куç хупса та пулин пăхатăп,
Курăнмастăн-и-ха хам ăшра?

Тăнласан-тăнласан, чăнах та,
Сиксе тухрăн темле авăкран.
Сан сăну-мĕн черчен те ăслă,
Пулăшасшăн тăран пек мана.
Сив шыва ывăçпа ăснăн
Ĕçсе ятăм эп сан кăмăлна...
Питĕ тутлă халь çав калаçу та
Пит илемлĕ пичетлĕ сăну.
Çӳçпеле эрешленĕ пуçу та
Хăйне майлă темле курăну.
Тен. май килнĕ пулсан, арçын пек
Тен, тытса та пăхаттăм кăштах?
Пуçласа чечек татнă ача пек
Аптраса çеç тăратăп вăрах.
Çав вăрахлăх вăл халĕ те пур-ха,
Халь те пур-ха çав кăмăл тени.
Эс çавна тараса çине хур та...

* * *

Кун кайса пырсассăн та
Пурпĕрех пăхатпăр-ха.
Кун çути, шанатпăр-ха,
Çитес çул пулать пуль-ха!
Акă ĕнтĕ сисрĕм, чăн та,
Çутă кĕчĕ кантăкран.
Урамра-мĕн пурнăç пур-ха.
Пĕр хĕвелсĕрех юлман!
Кун кайса пырсассăн та
Пурпĕрех пурнатпăр-ха,
Çирĕпех тăратпăр-ха...
Пĕр мĕлкесĕр юлнă чух та
Хамăра шыратпăр-ха!

ТУПМАЛЛИ

## *Ачалăх çăлкуçĕ*

1. Хам чĕрене сана парсаттăм..........3
2. Хулпуççие пусмасть кун-çул çĕклемĕ.........................................3
3. Аякра-аякра... Чĕлтĕрти чунăмра....4
4. Ăçта пытанчĕ-ши ачашлăх..............4
5. Манăн чун пек таçта... Аякра, аякра.............................................5
6. Сана ăнсăртран тĕл пулманшăн.....5
7. Кунран-кун шутлă пурнăçа............6
8. Ватăлмасть-ха авалхи вăрман.........6
9. Хуралнă çĕр çине хуллен..............7
10. Шăпа аça çапрĕ, тухатрĕ чуна.....7
11. Çул хĕррипе выртать хăйнепăхса.7
12. Ман ватăлайнă çамрăк туссене.....8
13. Мĕн-ма юрлама юрамасть-тĕр.......8
14. Ăшри хĕвел, юратнă шкул хĕлхемĕ...........................................9
15. Нихçан манас çук хурăнсем..........9
16. Çăмăл кĕвĕ карчĕ Чĕрене çу каçĕ.............................................10
17. Çаврăнать вĕçсе кăйкăр хир тавра.........................................10
18. Ăс-хакăл, туйăм. Юрă-ташă.........11
19. Хуралнă манн алă, Чулланнă чĕре.............................................11
20. Çул айккипе шупкалнă пусă........12
21. Çунат сарса çунать вут куçĕ.......12
22. Шĕл-кăвартан кăвайтăн чунĕ......12

23. Тататăп чăтса.............................13

## *НИХÇАН СЎНМИ ЧЕЧЕК*

24. Ача чухне чечек пуххи тăваттăм,......................................13
25. Тулли çут уйăх хăваратчĕ..........14
26. Ас тăватни, епле пĕринче..........14
27. Тўпере тўлек каç. Хура пĕлĕт хĕрри......................................15
28. Шурă уйăх пек, утать пĕр сассăр........................................15
29. Кăвак пĕлĕт тĕсĕ пур шур юр çинче.........................................16
30. Хула çийĕн паян Юркайăк вĕçет.........................................16
31. Хурăн, теççĕ сана, шап-шуртан.....................................17
32. Çул хĕрринче пĕр тĕмеске.........18
33. Малтан унне куçне тăм илчĕ.....18
34. Чĕр туратран тытма хăрарăм.....19
35. Пĕрле тиенĕ туйăм лавĕ............19
36. Ман умра эс Турă пек тăраттăн....................................20
37. Сăхăтпуç пикисем, çĕр çинчи çăлтăрсем,.................................20
38. Кам та пулин вуланă-ши сана...21
39. Пĕрле чухне пĕччен çўрерĕм......21
40. Пĕрмай сăнанă-ши сана?...........22
41. Юлашки эс манăн, юлашки.......23
42. Санпа юнашар пулнă чух..........23
43. Каç чунлă пулĕ – чарăнмарĕ......24
44. Халь тин мĕне вăл пĕлтерет?..................................24
45. Тăр кăнтăрлах хĕвелĕм анчĕ.......25

46. Нумай та кирлĕ мар мана.........25
47. Татах çак саманта тăсасчĕ.........26
48. Каллех хĕлле. Каллех пин шухăш...................................26
49. Чунра – хама çеç курăнмалăх....27
50. Шур пĕвĕ хĕвĕме хупмалăх..........28
51. Пĕр туйăм пур пек чĕрере..........28

## *ХĔРĔХĔМĔШ ХĔЛ*

52. Хĕлле те пулать çут хĕвел..........29
53. Телей ман яланах çӳлте...............30
54. Кĕрхи хĕвел кăштах ăшши...........31
55. Мана каçмасăр юрамасть.............31
56. Эрне ытла эп çĕр чаватăп..........31
57. Тепĕр утăм малта. Хыçалта ним те çук!..................................33
58. Юрлать Нарспи...........................33
59. Пĕлмен вăл мана, нихçан та курман.........................................34
60. Паян ирпе шăнтса пăрахнă.........34
61. Парăр мана, чун выçă.................35
62. Тăваттăн урапа тапаççĕ...............35
63. Кĕрхи каç чĕрере шиклĕх карчĕ..37
64. Ăшăхра та ишнĕ,........................38
65. Çывăрать лăпкă çын, хускалмасть те...........................................39
66. Ман хăватăм хама кура.............40
67. Хама çын пек эпĕ туятăп...........41
68. Çул иртнĕçем,...........................42
69. Пит шавлă тĕнчере пĕр сас........42
70. Çынран килет, çын тăвать..........43
71. Ăçта утмалла-ши, кампа каймалла,..................................44
72. Кунран кунах хама хистерĕм.......45

73. Хыт хирĕçӳ упрать тĕнче............45
74. Пур пурнăçăн илемлĕх мелĕ.........46
75. Тахçан тухатнă кив тĕнчен..........47
76. Шутланă-мĕн эп тĕрĕсех!.............48
77. Чăвашăн чунĕ упранать...............48
78. Пур манăн пĕр чир. Чĕтрет чĕрĕ тир..........................................49
79. Чул айĕнче ман чун вырттатчĕ.....50
80. Мĕн-ма мана малтан пĕтерчĕç,....50
81. Пĕр утрав....................................51
82. Ют сăмахсем кĕреççĕ чĕлхене......51
83. Чăваш пĕтес тесе шутларĕ...........52
84. Тупра хуплать чуна, çиет куçа,..52
85. Пĕрне-пĕри пулăшнине,...............53
86. Чун тĕпĕнче асамлă çутă.............53
87. Чăваш çути – чунри сăваплă туйăм..........................................54
88. Кĕреш тиетпĕр пĕр çын пек.......55
89. Юр хĕвсе лартнă февраль..........55
90. Сивĕтсе пăрахрĕ, ӳкрĕм чирлесе.56
91. Санпа тĕл пулманни çĕр çул та пулĕ иртрĕ.................................57
92. Хама шыратăп пĕрмаях,.............57
93. Ĕнер ман мăнук çуралчĕ............58
94. Хĕвел тухнине курса юлтăм........58
95 Турă тунă, тет, сана, хĕрарăм.....58
96. Хĕвел тухиччен пуçлать те..........59
97. Миçе хутчен сăмах эп панă........59
98. Ак, ĕнтĕ çурхи ăшă çил те.........60
99. Ун чух кĕркуннеччĕ... Шап-шур..61
100. Ирпе çил-тăвăл вăйланчĕ...........61
101. Паян мана питĕ çăмăл...............61
102. Пурнатăп эп çанталăк пек.........62
103. Хĕвел тухасса та кĕтетĕп...........62
104. Эп хама аякран курман................63

105. Çанталăк хăйне кăтартать.........63
106. Темле питĕ паллă сас................63
107. Вĕрене çеçкине тăкрĕ................64
108. Сарăлса çитеймен çулçă.............64
109. Кашни кун сана тăрласан.........64
110. Çемçе çанталăк çемĕçтерчĕ.........65
111. Çак хутлăхран эп тек
тухаймăп....................................65
112. Аптрамалла, халь тем тумалла
тет?..........................................66
113. Чĕвĕл чĕкеçĕн...........................66
114. Тухрăм та эпĕ, куратăп, тĕнче..67
115. Сана тута тусан тĕнче те.........67
116. Çĕр çине ирпе шур тăм ӳксен
те.............................................68
117. Эп пыратăп утса.......................68
118. Эс килетĕн пек вăрттăн............69
119. Эпир пуçтаратпăр çулçă............60
120. Мĕн чухлĕ сăвă çакă тĕнчере!...69
121. Кĕмĕл çĕрĕ халь сан аллунта....70
122. Эпир те йывăç пек, Иван.........71
123. Ма çырма пăрахрăн, тусăм........71
124. Тавах сана, пĕчĕк катаçăм.........71
125. Лăпкăн кăна пырса çапрĕ.........72
126. Пулнă пуль, тем те пулнă
тахçан.......................................73
127. Шутлама пĕлмерĕм ним те........73
128. Юр çăвать. Ку ним те маар....74
129. Хĕл ларнă тесеччĕ эпĕ.............75
130. Паян эп чупса пек килтĕм.......75
131. Пĕрре çех пĕр ĕçе тумарăм......76
132. Сăвă савни пек тутлă!.............76
133. Çӳп-çап шăтăкĕнчен.................78
134. Эп виличчен, ман алă чăтĕ-ха..79
135. «Ăçта каян, чĕкеç, каçа хирĕç».79

136. Эп юлтăм пулать чунсăр..........80
137. Кайăкăм ман, хăçан эс.............80
138. Шурă вĕт, тет, пĕри.................81
139. Паян пурпĕрех çыратăп.............82
140. Сĕм тĕттĕм çĕрте, тӳпе тĕпĕнче.82
141. Шап-шурах çеçкеллĕ турата........82
142. Питĕ сивĕ, сивĕ, терĕм...............83
143. Хĕвел курманни чылай та..........83
144. Эс таçтан аякран килнĕ пулĕ?...84
145. Кун кайса пырсассăн та............85

**Желтов Михаил Павлович**

## *МАЛТАНХИ СӐВӐСЕМ*

## *РАННИЕ СТИХИ*

***стихи***
***на чувашском языке***

Формат 60х84
Гарнитура Times
Бумага принтерная
Тираж 10 экз.
Самиздат «Семья»